В. РЗАЙ, Д. ДАНИЛОВ

# ÇАМРĂК ПИСАТЕЛСЕН ПУЛТАРУЛĂХĔ

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1934

В. РЗАЙ, Д. ДАНИЛĂВ

# ÇАМРĂК ПИСАТЕЛСЕН ПУЛТАРУЛĂХĔ

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТЕЛСТВИ
ШУПАШКАР — 1934

ВСЕНАРОДНА БІБЛІОТЕКА УКРАЇНИ ВУНБ

Редактор Н. Ф. ДАНИЛОВ.
Техн. редактор А. БЫКОВ.

Сдано в набор 31/V—34 г. Подписано к печати 31/V—34 г.

Формат бум. 62×94 1/32. Тираж 2000 экз.
Печ. листов 3 1/2. В одном печ. листе 16.074 знаков.

Чувашгиз № 30 Индекс X—4. Заказ № 1316.
Чувашлит № 1392.

Типография № 2 Чувашского Государственного Издательства в г. Алатыре, Чуваш. АССР,

## Çамрăк писатĕлсемпе поэтсен пултарулăхĕ тата пирĕн умри хăш-пĕр задачăсем[1].

Парти Тĕпкомĕн апрелĕн 23-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕ совет писатĕлсен пултарулăхне вăйлăн ÿсме пур йенчен те майсем пачĕ.

Вăл постановленийе йышăннă хыççăн икĕ çул иртрĕ ĕнтĕ. Пĕтĕм Сойузри Оргкомитетăн йулашки пленумĕ çак икĕ çул хушшинче совет литератури мĕнле çитĕнÿсем тунине палăртрĕ. Совет литератури малаллі пысăк утăмсем турĕ. Социалисăмла пурнăçа чăн-чăнах вĕренес ĕçе, вăл пурнăçра пулса пыракан тĕлĕнмеле хăватлă процессене тĕплĕн ăнланса илес ĕçе совет писатĕлĕсем ĕнтĕ чăнниех тытăнчĕç.

Нацилĕ республикăсенчи литературă вăйлăн чечекленсе пырат. Литературăра çĕнĕ кадăрсем çĕкленсе пыни, вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем ĕлĕкех çырма пуçланă пултарулă писатĕлсемпех ăмăртса пыни, тематикă пуйанланса, сарăлса пыни тата ыт. те—çаксем ĕнтĕ пирĕн çитĕнÿсене кăтартса тăраççĕ.

Анчах пленум çакна та каласа хăварчĕ: пирĕн литературă çаплах-ха пирĕн пурнăçран йулса пырат, социалисăм чăн чăн строитĕлĕсем, социалисăм чăн-чăн геройĕсем пирĕн писатĕлсем çырса кăтартакан обрăзсенчен нумай çÿлте тăраççĕ, вĕсенчен нумай илемлĕрех, вĕсенчен нумай туллирех.

Пирĕн, чăваш литературинче ĕçлекенсен, мĕн пур большевикла тÿрĕлĕхпе çапла каламала: пирĕн чăваш литератури пурнăçран кайа йулса пыни пĕтĕм совет литератури кайа йулса пынинчен тата аслăрах. Ку çеç те мар: епĕр чылай нацилĕ республикăсенчи литературăран та кайа йулса пыратпăр.

Йудин йулташ хăй докладĕнче çак икĕ çул хушшинче нацилĕ литературăсем калама çук вăйлăн ÿснине палăртрĕ.

Паллах, чăваш литератури те чылай çитĕнÿсем тунă. Çак икĕ çул хушшинче пирĕн чылай писатĕлсем çĕнĕ произведенисем çырса пачĕç. Вăл произведенисем пурнăçа, çак писатĕлсемех ĕлĕкрех çырнă произведенисенче кăтартнинчен тарăнрах, сарлакарах кăтартаççĕ (М.-Кошкински „Сатурпа Илем“, Мраҕка „Лайăх пурăнатпăр“, Хусанкай

[1] Çамрăк писатĕлсен канашлăвĕнче В. Рзай туса панă докладран.

„Магнитту“ 1. ыт). Çамрăк кадăрсем чылай палăрулă ÿсрĕç, вĕсенчен хăш пĕрисем (Саламбек „Иштул“) пултарулă ĕçлеме вăй ситернине кăтартрĕç. Нумай писатĕлсем хăйсене тĕреклетессипе, пурнăçа таранрах çавăрса илессипе темиçе майсемпе ĕçлеççĕ, çак пирĕн аслă тапхăра чăн-чăнах тивĕç произведенисем пама хатĕрлевеççĕ. Анчах апла пулсан та пирĕн каласах пулат: епĕр, чăваш совет писатĕлĕсем, нумайĕш, пире ÿсме, сарăлма пур майсем те панă историлĕ постановленирен вара иртнĕ икĕ çул хушши вăхăтпа кирлĕ пек туллин усă курма пултараймарăмăр. Мĕн пур тÿрĕлĕхпе пирĕн тата çаква та калас пулат: Ç. П. Петров 1932-мĕш çулта пирĕнпе калаçнă чухне пире панă кăтартусене, сĕнÿсене епĕр кирлĕ таранах туллин пурнăçлама пултараймарăмăр.

Пултарулăхлă ăмăртăва вăйлăн сарса йама пире мĕн-мĕн кансĕрлесе тăни çинчен кайарах, чăваш совет литератури умĕнче, пирĕн Оргкомитет умĕнче тăракан задачăсем çинчен асăннă хушăра калама тивет. Халĕ ман умри задачă—çамрăк писатĕлсемпе поетсен пултарулăхне палăртасси, пирĕн çамрăк кадăрсем мĕнле ÿсиине, вĕсем мĕнле çитĕнÿсем тунине, вĕсен пултарулăхĕнче мĕнле тĕп çитменлĕхсем пуррине палăртасси.

Çамрăк вăйсен пултарулăхне пăхса тухас тĕлĕшме епĕр, тĕрлĕ сăлтавсем пирки, нумай кайа йулса пыратпăр. Палăртсах каласан—çак çулăн февраль уйăхĕнче çеç ку ĕçе сарса йама пуçларăмăр. Ун чухне Оргкомитет Пушкай, Каттай, Вашки поетсен пултарулăхне пăхса тухассине чылай ăнăçлă туса иртерчĕ.

Çапла вара пайанхи канашлу ку тĕлĕшрен иккĕмĕш утăм пулса тăрат. Пирĕн çамрăк автăрсем хăйсен шучĕ йенчен те тата пирĕн тухса пыракан продукцинчи хисепĕпе те чылай пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Литературă тĕлĕшĕпе ĕçлекенсем, уйрăмах—критиксем вĕсен пултарулăхне пăха-пăха пыни питĕ кирлĕ. Вĕсем ăна тивĕçлипе епĕр çамрăк писатĕлсемпе поетсен йулашки çулсенче тухнă продукцине çийелтен çеç пăхса тухсан та курма пултаратпăр. „Сунталпа“ „Трактăр“ журналсенче йулашки вăхăтра хăшпĕр çамрăк писатĕлсем—Еллийĕвпа Кипек—„Трактăр“-та, Кăтра Мишша, Уйар—„Сунтал“-та—чылай паллă вырăн йышăнчĕç. Пĕтĕмĕшпе илсен, патшалăхăн Чăваш издатĕлстви кăларакан продукцинче çамрăк вăйсем мĕнле вырăн йышăнни çинчен те çаплӑх каламала.

Мĕн çинчен çыраççĕ пирĕн çамрăк вăйсем, мĕнле ыйтусене пытрех тапратаççĕ.

Партин Чăваш Обкомĕ йертсе пынипе чăваш ĕçхалăхĕ хăйĕн ĕлĕкхи асаплă пурнăçĕн тымарĕсене тата-тата пырса, пирĕн çĕршывра социализм тăвас ĕçе хастарлăн хутшăнса

пыни чăваш совет литературишĕн нихçан иксĕлми чĕрĕ темă пулса тăрать. Çамрăк автăрсем пуринчен питрех йал социалисăмла улшăнса пыни çинчен, йалта кивĕ хугшăнусем пĕтсе çĕнĕ хутшăнусем çуралса пыни çинчен, кулака çапса çĕмĕрсе пыни çинчен, йалăн чăн-чăн ĕççыннийĕ çĕнтерĕвĕ çинчен, колхоз ĕçĕ урлă йал ĕççынни хăйĕн шухăшĕпе туйăмне улăштарса пыни çинчен çыраççĕ. Парти йертсе пынипе йал уйрăм харпăрлăхлă хутшăнусене пĕтерсе социалисăмла хутшăнусем ăшне кĕрсе пыни—вăл калама çук тарăн процес. Вăл процес хайар класлă кĕрешӳпе пырать.

Малтанах пирĕн çак çулсенче ӳссе пыракан талантлă çамрăк автăрсенчен пĕри çинчен—Еллийĕв çинчен калама шут пур. Ун пултарулăхне пăхса тухни пире нумай йенчен усăлă урокоем пама пултарать. Еллийĕв çак пĕр çул хушшинчех темиçе калав çырса çапса кăларчĕ. („Çаран çинче", „Чĕн тилхепе", „Йышран уйăрăлсан"). Пур калавсенче те Елливĕв хăй умне çивĕч ыйтусем лартать ыйтусене татвинче автăрăн художĕствăлă витĕмлĕх, сăнавлăх пурри пĕтĕмĕшпе илсен, аван курăнать темеле. „Çаран çинче", „Чĕн тилхепе", „Хапха" калавсем—чылай витĕмлĕ Ку калавсенче автăр, пĕтĕмĕшпе илсен, пурнăçа чылай маçтăрлăхпа кăтартнă темеле.

„Çаран çинче" калавра Еллийĕв пирĕн колхозниксен тĕп сийне кăтартма тăрăшнă. Вăл си „çурăмĕ хыçĕнче" уйрăм хуçалăхлă харпăрлăх çуратнă шухăш-кăмăлсен йăвăр хутаççийĕ çакăнса тăрать. Вăл си çыннисем халь, колхоза кĕвĕскерсем, колхоз ĕçĕ урлă, пурăнмăçемĕн, ĕçленĕçемĕн çав йăвăр хутаçран—хăйне хăвăртрах, хăшĕ йерипентерех—çăлăнса пыраççĕ Çак процеса Еллийĕв,—унăн пĕтĕм пултарулăхĕ витĕр тухакан пĕр пысăк йăнăш прасвана пĕр мехелĕхе астумасан, чылай тарăн, чылай ĕнентерӳлĕ кăтартнă. Еллийĕв пултарулăхĕнчи лайăх туртăмсенчен пĕри, вăл—автăр пурнăçа тарăнтарах кăтартма тăрăшни, схемă йĕрне йышăнманни. Еллийĕв çынсене кăтартас вырăнне çырансем кăтартмасть, вăл çынсене чĕрĕ туйăмлă кăтартма тăрăшать.

„Хăш-пĕр етем пит-куçне алăк гек хупма пĕлет пулсан, çак етем питĕрме те пĕлет. Пăхать вăл йăвăррăн куçне аранаран çĕклесе. Мĕн çинчен шухăшлать-ши? Сар хĕр Ернеç çинчен-ши? Колхоз çинчен-ши? Мĕн тĕрлĕ пичĕ çиве тилмĕрсе пăхсан та—пĕлес çук.

Ун çава сассинче чăн-чăн кирли кăва палăрать. Чĕре те çук, кăмăл та çук".

Ку—„Çаран çинчи" пĕр çынна—Пуçара панă характеристикăн пĕр вак çеç пайĕ (деталĕ). Ытти çынсене те автăр кашнине уйрăм „тĕс", уйрăм характеристикă парать.

Вăл характеристикă урлă автăр хăйĕн геройĕсен çийелти тĕсĕсене çеç мар, вĕсен шалти шухăш-кăмăлĕсене, вĕсем хăйсен таврари йапаласем, таврара пурнакан чĕрчунсем т. ыт. çине мĕнле пăхнине те кăтартма тăрăшать. „Çаран çинче"—пысăк калав мар, анчах автăр хăй умĕнче тăракан задача çапах та чылай йенчен пурнăçлама пултарнă темеле. Елмеш, Пуçар, Ернеш, Кăчăк, Чапук, Айслу—ку образсем хальхи вăхăтра пирĕн колхозра мĕнле çынсем пурăнса, ĕçлесе пынине, пĕр йенчен илсен, чылай ăнăçлă кăтартаççĕ. Елмеш—колхоз председатĕлĕ, вăл колхоз ĕçне ним йулмиччен тенĕ пек парăннă çын, колхоза ĕç йенчен те, шухăш йенчен те пултарулă йертсе пырать. Политикăна пĕлнипе вăл ытлах мухтанма пултараймасть, колхозниксем паракан ыйтусем çине вăл хăш-пĕр чухне тĕрĕс ответ та параймасть, анчах çапах та вăл колхоза йертсе пыракан çын, колхозшăн мĕн пур хăйĕн чунхавалĕпе ĕçлекен çын. Чапук, Пуçар, Ернеç, Айслу—кусем колхозниксен тĕп массин представитĕлĕсем. Хăш йенчен пăхсан вăл массă „пĕр тĕслĕ"? Мĕн çине вăл пĕр пек пăхать? Вăл массăран пĕрисем кайарах, теприсем маларах парти вĕсене колхоз тума чĕнни чăнах пĕртен пĕр тĕрĕс чĕнӳ пулнине, колхоз çулĕ пĕртен пĕр тĕрĕс çул пулнине ăнланса, колхоза кĕнĕ—çакă вĕсемшĕн тĕп пĕрпеклĕхсенчен пĕри пулать. Чапукăн, Пуçарăн, Ернеçĕн, Айслун—кашнин мĕн чухлĕ те пулсан уйрăм хуçалăхлă харпăрлăх çуратнă шухăш-кăмăлсĕн йулашкийĕсем, йăлисем т. ыт. пур. Анчах автăр çак пĕрпеклĕхе çеç кăтартмасть, автăр вăл пĕрпеклĕх уйрăм çынсенче чĕррĕн мĕнле уçăлса-хупăнса пынине те кăтартма тăрăшнă. Чапук çапах та Пуçар мар, Айслу çапах та Ернеç мар. Пуçар, сăмахран, калаçма йуратман çын, калаçсан та кĕскен калаçать, ĕçе лайăх ĕçлет, анчах ĕçре пысăк савăнăçах курмасть, туймасть, вăл пĕрлешӳлĕ ĕçĕн савăнăçĕпе савăнас çĕрех çитеймен-ха. Ун ĕçĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, ĕçе хăнăхнă çын ĕçĕ çеç... Чапук веçех урăхла: вăл вĕри çын, активлă çын, хăйĕн вĕри активлăхĕ пирки вăл ĕлĕкхи саманара та, хальхинче те „шурă çурта" та лексе илме ĕлкĕрнĕ. Мĕн килнĕ хушăра вăл колхоза, колхоз йĕркисене тишкĕрме те хатĕр, анчах унпа пĕрле çав ĕçех колхозри кулак агĕнчĕ Кăчăк тума пуçласан, вăл ăна çавантах хăйĕнчен сирсе пăрахать. Акă Чапукпа Кăчăк хушшинчи калаçун пĕр вырăнĕ:

— „Пире ĕçлеттерсе пултăр. Çапла Чапук. Пирĕншĕн тăрăшни курăвмасть-ха. Ав, тăрăшмастпăр-и ĕнтĕ, ĕçлеместпĕр-им? Чапне кам илет? Ударниксем. Ударниксем вĕт пирĕн пур: çавсем чапа тухаççĕ епĕр ĕçленипе. Епĕ маннă та... Есĕ те ударник мар-и-ха çав?

— Пулсан-пулмасан, сан мĕн ĕç. Мĕн шăлна хăйраса тăратăн. Темскер ĕçлесе каплантарнă ĕнтĕ колхоза кĕнĕренпе. Çапах: „епĕр ĕçлекенни, епĕр ĕçлекенни...“ Кулак хўри...

— Есĕр кăна ĕçлетĕр ĕнтĕ.

— Ĕçлетпĕр çавă,—сасартăк çухăрса йарат Чапук,— сан пек мар, ђађи. Çапах... калаçса пырат“.

Хăй вăхăтĕнче Чапук кулак серепине те лекнĕ пулнă, анчах кулак Сентимер пĕр кулак пуххинче колхоза хирĕç, колхоз тăвакансене хирĕç вĕсем мĕншĕн тата мĕнле майсемпе, мĕнле ĕмĕтсемпе кĕрешнине уççăнах каласа парсан, Чапук, çав пукура лараканскер, хăй йут картана лекнине çавăнтах туйса илет те, колхоз тăшманĕсене хирĕç çапла касса татат:

— „А-а, есĕр апла иккен. Апла иккен есĕр. Есĕр пире валљљи хатĕрлетĕр иккен „çĕнĕ йупасем“. Епĕ, ухмах, сире çын тесе, сирĕн пата килетĕп Ата, хатĕрлĕр. Есĕр йун ĕçме вĕреннĕ ĕнтĕ... Ĕçĕр. Кўпĕнмĕр-и тен. Тен хатĕрлевĕ „йупа“ хăвăршăн кирлĕ пулми?...

Тĕлĕнсе кайнă ушкăн çăвар уçайман. Чапук хăтăрма пултарнине вĕсем ĕлĕкех пĕлнĕ, анчах капла хатĕр тилĕрессе пĕлмен.

— Вунсаккăрăмĕш çул мар. Кăтартăттăм сире „йупасем“... Ну, чим ха Хаљ те лекĕр-ха.. Лекĕр-ха пурпĕрех“. Çав каçах Чапук колхоза кĕме ыйту парат.

Колхоз массин „Утă çинче“ кăтартнă ытти представителĕсем те çапла хăйсем майлă хăйсене уйрăм пĕр тĕслĕ. Вăл „тĕс“—çав пĕр тĕп массăн индивидуаллă уйрăмлăхĕсене, вăл массă колхозшăн тăнинче, колхозшăн ĕçленинче унăн ăстăнлăхĕ, тăрăшăвĕ, усăлăхĕ темиçе хисепре тăнине кăтартат. Автăрăн сăнав йĕппи çакăнта—индивидуаллă уйрăмлăха, индивидуаллă чĕрĕлĕхе кăтартнинче чылай çивĕч Анчах, паçăрах кăшт асăнса хăвартăмăр: Еллийĕв пултарулăхĕнче совет литературине йуг прсăнасем пур,—Еллийĕв пирĕн социалисăмла пурнăçăн хăшпĕр йенĕсене тĕрĕс мар кăтартат, ултавлă кăтартат—кăна хыттăнах калама кирлĕ.

Паллах, епĕр автăра йурийех, пĕле-тăркачах пурнăçа тĕрĕс мар кăтартат, тенинчен инçе тăратпăр, анчах вăл тĕрĕс мар кăтарту ăçтан килни çинчен, унăн социаллă тымарĕсем ăçтала тăсăлса пыни çинчен хăй вырăнĕнче каласах пулат. Тĕрĕс мар, ултавлă кăтарту Еллийĕвăн пуринчен питрех „Йышран уйăрăлсан“ калавра уççăн курăнат, анчах унăн çулĕ, çав тĕрĕс мар кăтартун паллисем „Çаран çинче“ те (тата ыт. йапалисенче те) курăнаççĕ. Вăл çул—идеалисăмла литературăран; автăр хăй геройĕсен шухăш-кăмăлĕсене, ĕмĕчĕсене вĕсен

социаллă практикинчен, пурнăçри класлă éçéсенчен, класлă интересéсенчен уйăрса кăтартни.

Акă тĕслĕх: Пуçар („Çаран çинче“), хресчен ĕç массин пĕр представителĕ пулса тăраканскер. Еллийĕв шухăшĕпе колхоза пĕр вăхăтра мĕншĕн кĕмесĕр тăнă ха? Мĕншĕн тесен Пуçар çав-тери хăйне хăй йуратакан çын, çав-тери мăнкăмăллă çын пулнă имĕш:

„Тăхтаса тăчĕ кĕмесĕр мăнкăмăллăхпа çеç: çын, вăл мар, пуçланăран, çын унтан иртнинчен. Колхоз ÿснĕçемĕн Пуçар пушшех вĕчĕхнĕ,—вĕт унсăр пуçне ун тантăшĕсем тăваççĕ çĕнĕ ĕç“.

Пуçар тăхтарах колхоза кĕрет. Мĕнле сăлтав тĕртет ăна çакна тума? Еллийĕв шучĕпе пĕр „ăнсăртран“ пулнă йапала çеç.

Пуçара пĕринче хăй йуратакан хĕрĕ хирĕç пулать:

— Мĕншĕн-ха есĕ, ача, кĕместĕн колхоза?

Пуçар çăвар уçиччен татах çăмăллăн кустарчĕ.

— Ан та кала. Пĕлетĕп, пĕлетĕп мĕншĕн кĕменнине... Хăйсем турĕç тетĕн ĕнтĕ ес... Манран иртрĕç, тетĕн. Курамха, мĕнле ĕçлĕр, тетĕн. Çапла вĕт, Пуçар, йа?!

„Тÿрĕ сăмах хирĕçтернипе“ вара Пуçар колхоза кĕрет имĕш.

Малтанах çакна калас пулать: ĕçхресчен массин представителĕсемшĕн çапла мешченле-интеллигентла мăнкăмăллăх пĕрре те характерлă мар. Мăнкăмăллăх шухăшкăмăлĕсем ытти мĕн пур шухăш-кăмăлсем пекех, вĕсем пĕрре те хăйсем халлĕн çуралса, хăйсем халлĕн ÿссе, чĕрĕлсе, пĕтсе пымаççĕ, вĕсем производствă хутшăнăвĕсемпе (отношенийĕсемпе) практикăпа çыхăнса тăраççĕ, вĕсенчен килеççĕ,—кăна ĕнтĕ Еллийĕвăн пĕлмеле-тĕр

Пуçар пĕр вăхăта колхоза кĕмесĕр чарăнса тăнин тĕп сăлтавĕ ĕнтĕ, паллах, унăн уйрăм харпăрлăх туртăмĕсенчен килсе тăнă, Пуçар, вăл харпăрлăхран хăпма шикленсе, хăраса тăнинчен, вăл харпăрлăх пĕтессинчен шикленнинчен, йал социалисăм çулĕпе кайма пултарнине ĕненсех кайманнинчен килсе тăнă. Çавăн пекех вăл колхоза кĕнин тĕп сăлтавĕ те—малала пыракан пурнăçран, практикăран тухнă, ĕçхресченсем нумайĕш социалисăм çулĕ çине тăрса тĕреклевсе, ураланса пынинчен, çавна кура Пуçарăн уйрăм—харпăрлăхлă ăстăнĕ улшăнвинчен, вăл колхоз çулĕ чăн-чăн пурнăçлă çул пулнине ĕненме пуçланинчен, унăн шухăш-кăмăлĕсем урăх пахалăхлă çулпа пыма тапратнинчен тухнă. Ĕçхресченсем хушшинче, йалта, Пуçар „ăнсăртран“ пулнă çын мар пулсан, çапла анчах пулма пултарнă унпа.

Шухăш-кăмăлсене, идейăсене пурнăçран уйăрни, пурнăçри çынсене, вĕсен шухăш-

кăмăлĕсене, ĕмĕчĕсене конкретлă историлĕ практикăран уйăрса кăтартни—Еллийĕв пултарулăхĕнче пысăк хăрушăлăх пулса тăрать.

Акă тата çав уйăрун „чечекĕсем". Еллийĕв Ернеш колхозницă шухăшĕсене кăтартса парать те, вĕсене ниçта та çителĕклĕн тÿнтермест:

„Кам пĕлет? Çак кикен, çак курăк, çак пĕлĕт, çав тĕнче маншăн кăна, мана курасшăн çеç ÿсвĕ пулĕ,—шухăшлать те çавăлтах татать шухăшне,—çук апла мар. Тĕнче тĕнчешĕн, етем те тĕнчешĕн, курăк та, чечек те... Пурте телейшĕн, пурте чĕрĕ, тулăх пурнăçшăн, пурте, пурте... Етем те, курăк та... Етем те киленме çуралнă, етемпе етем пĕрлешсе, кулса, каласса киленме çуралнă.

Мĕнле-ха туйăмаççĕ çавна етемсем? Тараççĕ телей çăлĕнчен—етемрен. Хупăнаççĕ, кĕреççĕ хăйсен ăшне. Акă Пуçар. Палăртмаст вĕт-ха вăл хăй чĕрине. Пĕлетĕп-çкеха,—ун ăшĕнче ырă, сутă кăмăл. Ылттăн кăмăл. Ун ăшĕнче, Чапук, Кăчăк (Кăчăк—кулак агĕнчĕ, В. Р.), Пархун (лодырь, В. Р.) ăшĕнче те илемлĕ çемçе чĕре. Кашни етемре, кашни çынра... тĕнчери етемлĕх хăй ăшĕнчи ырра пĕр сасартăк пĕрĕхтерсе кăларсан,—тухĕччĕ çав хатĕр аслă, вĕçĕмсĕр, вĕçсĕр ырă кулă, ырă çутă; вăл çутă çумĕнче хĕвел çутти те тĕксĕмĕн курăнĕччĕ. Мĕн пур етем чĕринчи вута, хĕмленекен, çулăмланакан вута пуçтарса, мĕнпе те пулсан чĕрсен,—вĕт ирĕлмеле пăрлă тинĕс, ирĕлмеле мĕн пур тĕнчери ирсĕрлĕх, курайманлăх. Çук-çке-ха анчах. Пытараççĕ-çке-ха етемсем кăмăлне шала. Вăтанаççĕ ырра кăтартма".

Автăр пурнăçа, çынна, çынри кашни лайăх туртăма, кашни курăка, кашни чечеке чĕре ыратулă пăчăртаниччепех йуратнинче, тен, пĕтĕмĕшпе илсен, начаррийех нимех те çук тăр, тен, вăл айаккинчен автăрăн талант пурри çинчен калать тăр. Анчах, вăл йурату пурнăç умĕнче суккăрланать пулсан, вăл йурату çак историлĕ тапхăрта, пĕтĕм тĕнчере тата пирĕн çĕршывра та класлă кĕрешÿ мĕнпур çивĕчлĕхпе пынă тапхăрта „кашни çынра" (апла пулсан—рабочире те, буржуара та, колхозникре те, кулакра та) пурнăçра çук пĕр пахалăх курать пулсан, етемлĕхри уоаллăхсене пĕтерме, класлă хирĕçÿсене, класлă обшчĕствă çуратнă мĕн пур ирсĕрлĕхсене пĕтерме пурнăçра çук çулпа чĕнет пулсан,—паллах, вăл йуратăва пирĕн вăйлăн, мĕн пур хайарлăхпа сирсе пăрахмала, кун çинчен автăра хыттăн каласа хăварас пулать.

Çак сийенлĕ пусăм—ăçта паллăн, ăçта паллăнах мар Еллийĕвăн пур йапалисенче те сисĕнет. Вăл пусăм автăр ăстăнĕнче пролетариата йут шухăшсем пуррине пĕлтерет—ку пĕр йенчен, тепĕр йенчен, пирĕн шухăшпа, ку йапала автăр вырăс клаççикĕсенчен критиксĕр вĕренинчен, вĕсен çтилĕн паллисене хăйĕн пултарулăхĕ ăшне критиксĕр кĕртнинчен килет. Кăна епĕр, сăмахран, автăрăн художĕствăлă пултарулăхне пăхса тухнинчен çеç мар, тата унăн статйисенчи („Сунтал", „Трактăр") шухăшĕсенчен те уйăрса илсе курма пултаратпăр.

Еллийĕвăн пултарулăхне туллирех тишкĕрес тесен, вăл пултарулăхран çамрăк автăрсем мĕнле уроксем илме кирлине палăртарах парас тесен, унăн „Йышран уйăрăлсан" йатлă пысăк калавне тĕпчемеле.

„Йышран уйăрăлсан" калавра Еллийĕв пĕр Питтай йатлă хресчене,—ăспуç йенчен те, пурнăç йенчен те вăтам сынна,—кăтартма тăрăшнă. Çак сынна йал хушшинче хăйне майлă уйрăм условисем килсе пулнипе (темшĕн çапла вара?) йалсовет председатĕлне суйлаççĕ. Малтан çаксенер председатĕлре лайăх ĕçлет, кайран хăйĕн тата ытти сынсен субйективлă йенĕсем пирки начар ĕçлеме пуçлать, йалсовет ĕçне пĕтĕмпех йухăнтарса йарать. Калавăн малтанхи страницисемех,—кусенче автăр Питтайа характеристикă парать, унăн психологиле т ыт. уйрăмлăхĕсене палăртать,—вулакана сыхлантарма тытăнаççĕ. Кунта каллех вулакан хайхи Пуçарах курать; анчах кунти Пуçар, каларăмăр, Питтай йатлă, кунта тата вăл хăйĕн мĕн пур кĕрнеклĕхĕпе тухса тăрать, темеле. Питтай Пуçартан нумай туллирех. Питтайăн хăйне хăй йуратни, Питтай мăнкăмăллăхĕ тата пысăкрах. Вăл хăй пуçласа хуть те кирек-мĕнле сынпа та калаçмасть, хăй пуçласа никам патне те пымасть, анчах çав сынах Питтайа малтан хăй чĕнсен, хăй йăхăрсан, калăпăр, çав сынах йе çав сынсемех хăйсем Питтайа—хăнана, кампанийе йе пĕр пĕр çавăн пек урăх çĕре чĕнсен, Питтай вара савăнса, киленсе каçсах кайать имĕш. Ун чухне вара, унăн мăнкăмăллăхĕ, хăйне валли апат тупнипе, вăл хăйне хăй аван „чувствăвăт" тăвать. Питтай „мания величия" текен чирпех чирленĕ тесен те ытлашши пулас çук.

Пĕр-пĕр салхулă ĕмĕрти таçти çăва патĕнчи уйес мешченне çапла сăнласа ӳкернĕ пулсан, çак сын паллисем, тен, чăнах та пурнăçлă пулнă пулĕччĕç, çавăнпа ĕнентерӳлĕ те пулма пултарнă пулĕччĕç. Кунта вĕсем кулăшла та камитле анчах.

Калав сыххи çапла сӳтĕлсе, сарăлса пырать: йалсовет председатĕлĕ вырăнĕнче Питтай пĕр вăхăт чылай лайăх ĕçлет, йалсовет умĕнче тăракан ĕçсене вăхăтра та типтерлĕ туса пырать, хăй йулташĕсемпе—активиссемпе лайăх

пурӑнат, активиссем те унпа лайӑх пурӑнаççӗ, ӑна пулӑшаççӗ. Анчах акӑ—Питтайа лайӑх ӗçленӗшӗн премии пара ççӗ. Премии илнӗ хыççӑн вара... пӗтӗм ӗç кутӑн-пуçӑн çавӑрӑнса ӳкет, пӗтӗм ӗç чарӑнат.

„Тата çине-тӑрса ӗçлес вырӑнне йалсовет членӗсем сӑмсисене пӑрчӗç, ӗççене йапӑх ӗçлесе пыра пуçларӗç. Хуллен-хуллен çемçелчӗç вӑрттӑн".

Питтай кӑна кура хӑйӗн „тактикине" улӑштарат те, вара акӑ мӗн пулса тӑрат:

„Перне пӗрре кӑшкӑрса пӑрахрӗ, тепӗрне пӑртак хыттӑн чӗнчӗ— ак çитрӗ те йалсовет членӗсене тата ытларах кутӑнлашма. Вӗт вӗсене Питтай ӗмӗр тав тумала. Вӗсем ӑна „комиссара" лартнӑ Вӗсем пурриппе вӑл премии илнӗ. Йепле хӑйат-ха вӑл в:сене кӑшкӑрма? Йалсовет членӗ Савтей хӑйне пӑртак хытӑ чӗннӗренпе йалсоветне пыма та пӑрахрӗ. Уҥар ытларах та мӑшкӑласа пӑха пуçларӗ. Исмула сӑмса тӑрӑх çеç пӑха пуçларӗ. Ӗçсем начарланнӑçем начарланчӗç. Ӗçсем йапӑхса кайсан, йалсовет членӗсем пуш шех итлеми пулчӗç Питтайа. Тен Питтай парти йачейкипе питрех çыхӑннӑ пулсан, нимӗскер те пулман пулӗччӗ, пурте иртӗччӗ мелпе. Анчах пирӗн Питтай мӑнкӑмӑллӑхӗпе, парти йачейки секретарӗпе нимӗн те калаçмарӗ (парти йачейки çекретарӗ Тимрӗç, вӑл ытти активсенчен ни пӗлӗмлӗхпе, ни пултарулӑхпа уйӑрӑлса тӑман", мӑнкӑмӑллӑх та ун сахалах мар,—мӗнле калаçӑн унпа В. Р.), никама хӑй йенне çавӑрма тӑрӑшмарӗ, массӑпа лайӑхрах çыхӑнса актива организацилес темерӗ (актив пӗтӗмпе „сӑмсине пӑрат те" ӑçта организацилӗн ӑна унта... В. Р.), йӑлт хӑй вӑйӗ çине шанчӗ, хӑй влаçӗ çине".

Вӑт ӑçта çитрӗмӗр ӗнтӗ идеалисӑмлӑ çунашка çине ларса! Класлӑ практикӑ мар иккен, класлӑ интерессем мар иккен „тӗртсе" пыраççӗ çынсене, вӗсем хӑйсене хӑйсем йуратни, вӗсен мӑнкӑмӑллӑхӗ тӗп тӗртев пулат иккен çынсен ӗçӗсенче! Кунта, ку каликра, ку тӗртев „демон" пекех хӑватлӑ ӗнтӗ.

Питтай шанчӗ хӑй çине—**мӑнкӑмӑллӑх пирки**, Савтей, Уҥар, Исмула тата ыт. активсем ӗçлеме пӑрахрӗç—**мӑнкӑмӑллӑх пирки**, йачейкӑ çекретарӗ Питтай ун патне пулӑшу ыйтма пырасса кӗтсе ларат—**мӑнкӑмӑллӑх пирки**, массӑ Питтай ун патне „çыхӑнма" пырасса кӗтсе ларат—**манкӑмӑллӑх пирки**. Пурне те çав мӑнкӑмӑллӑхӑн „демонла" хӑвачӗ ним йулмиччен тыткӑнласа илнӗ!

Кашни ӗççынни **чи малтан** хӑйӗн йулташӗ ун ури çине, унӑн „епӗ" тени çине пуснипе сыхласа тӑрат, тенӗ хыççӑн: Совет çӗршывӗнчи ӗççыннисем социалисӑм тӑваççӗ, тенине ӗненме пулат-ши апла?! Совет Сойузӗнчи ӗççыннисем

парти йертсе пынипе хаљхи вăхăтра пирĕн çĕршывăн економикинчи капиталисăм йулашкисене пĕтерсе пыраççĕ, капиталисăм тăллинчен çăлăннă ирĕклĕ ĕç урлă хăйсене чăн-чăн çынсем туса пыраççĕ, хăйсен ăстăнĕнчи капиталисăмла туртăмсене, çав шутрах ыратулă, чирлĕ мăнкăмăллăха, хăйне хăй ыратулă йуратнине (паçăрах кăпт асăнтăмăр—кун пек ыратулă мăнкăмăллăх, хăйне хăй ухмаха йеричченех йуратни—обшчĕствăн тĕп ĕç класĕсемшĕн нихçан та ниçта та характерлă пулман, пулма та пултарайман) пĕтерсе пыраççĕ, чăн-чăн ирĕклĕ çынсем пулаççĕ, ĕççынвисемшĕн ĕç тени ĕнтĕ с. вап, паттăрлăх пулса пырат, тенисене ĕненме пулат-ши апла?!

Ак ăçта пĕрсе çитерчĕ пире хайхи Еллийĕвăн тăхăр çунатлă демонĕ...

Малала.

„Пирĕн йал активисĕсем те, активпе маррисем те хăйне пĕр тĕрлĕрех Кашни йалăн хăйĕн тĕсĕ пур. Кашни йал çынписен хăйсен уйрăмлăхĕ пур. Çавăн пек пирĕн йал çынписем хăйсене пĕр тĕслĕ. Вĕсем пурте ăслăн пурăнма тăрăшаççĕ, пĕр-пĕрне иглемеççĕ. Пурнинчен питрех çазăн пек йапала активиссем хушшинче“.

„Питтайа çав хатĕр кŷрнтерпĕ вĕсен кăмăлĕ. Мĕскерлеха вăл çынсем активлăха пĕр çын çине йăвантарма йураттаççĕ? Вĕт.вĕсем те коммунис (Питтайĕ те коммунис—ăнланмала мар, м. т кун умĕн те, кун хыççăн та автăр Питтайа коммунис тесе каламаст. В. Р). Вĕсем те кашни пĕчĕк ĕçшĕн, кашни шăйрăкшăн ответлă. Мĕншĕн-ха епĕ кăна? Мĕншĕн çийеççĕ пĕр-пĕрне? Ответ курăнман. Ответ пăхса та курăнман“.

Пĕр-пĕрне кышлани, пĕр-пĕрне ырă сунманни—акă мĕн чи тĕп, чи тĕшĕлĕ характерлăх пулса тăрат иккен йалти активсен шухăш-кăмăлĕсенче, ĕçĕсенче. Акă мĕнле елеклĕ йапала патне çитсе çапăнма пултарат писатĕл—вăл çынсене пурнăçран, клас практикинчен, клас интересĕсенчен уйăрса кăтартма пуçласан, вăл вĕсен шухăшкăмăлĕсем çине хăйсем тĕллĕн çуралакан, хăйсем тĕллĕн аталанакан йапаласем çине пăхнă пек пăха пуçласан.

Идеалисăм, тенĕ Ленин, вулгарлă материалсен куçĕпе пăхсан анчах чепуха пулат; диалектикăлă материалисăм куçĕпе пăхсан вăл—„одностороннее, преувеличенное, чрезмерное. .развитие (раздувание, распухание) одной из черточек, сторон, граней познания в абсолют, оторванный от материи, от природы, обожествленный“,—пулат тенĕ.

Çапла майлăрах килсе тухнă та ĕнтĕ Еллийĕвпа. Вăл пурнăçăн пĕр йенне, тĕп мар йенне ытлашши пысăклатса ŷкерпĕ, тĕп йапалана тĕп маррипе, сăлтава çледствипе,

ҫледствине сӑлтавпа улӑштарса кӑтартнӑ. Ҫапла вара пурнӑҫпа (практикӑпа) шухӑша пӗр чӗрӗ ҫыхӑра, материаллӑ никӗсе тӗп вырӑна хурса кӑтартас вырӑнне вӗсене иккӗшне те тӗрӗс мар кӑтартнӑ, ултавлӑ кӑтартнӑ.

Хӑшпӗр вырӑнсенче автӑр ӑна хӑйех сисет курӑнать. Вӑл хушӑран идеалисӑмла тӗлӗкрен вӑранать те, пурнӑҫа тӗрӗс мар кӑтартвине мӗнле те пулса „материалисӑмла" сӑлтавлама тӑрӑшать. Пӗр ҫӗрте вӑл хӑйне хӑй п ӗ р й а л к а р т и п е пӳлесшӗн. Вӑл йалӑн социаллӑ пахалӑхӗ ытти йалсенчен урӑхла имӗш... Тепӗр ҫӗрте, ку „сӑлтав" тӗплех марриве кура пулас, ӑна тӗплеме пӗр уйрӑм глава парать. Ку глава вара—пӗтӗмпех публицистикӑлӑ глава, ҫитменнине вӑл ытти художӗствӑлӑ главасемпе хирӗҫӳре тӑрать. Унта автӑр, ытти ҫӗрте урӑхла кӑтартнисене кура тӑркачах, йалсовет ӗҫӗ йапӑхса кайнинче пӗр Питтай анчах айӑплӑ, ытти активиссем Питтай пекех мӑнкӑмӑллӑ мар, вӗсем Питтайа п у л ӑ ш а с ш ӑ н п у л н ӑ; ҫавӑн пекех йачейкӑ ҫекретарӗпе ытти коммуниссем те Питтай пек мар, вӗсем Питтайа пулӑшасшӑн й а л а н а х к а л а ҫ н ӑ, тесе пӗлтерет... Тепре каласан, ҫак пайра та,—вӑл ытти пайсемпе хирӗҫӳлӗ тата ахаль пӗлтерӳ анчах пулнине кӑларса пӑрахсан та,—ҫаплах тӗрӗс кӑтарту ҫук, мӗншӗн тесен активсен тӗп масси (партире тӑракансен те, тӑманнисен те) п у л ӑ ш а с ш ӑ н п у л н и п е т а т а й а л а н а х к а л а ҫ н и п е ҫеҫ ҫураҫмаҫҫӗ (болтунсем те пур ӗнтӗ, паллах, вӗсем ҫинче Сталин йул. партин XVII-мӗш сйесӗнче ахальтен чарӑнса тӑман тӑр), вӗсем т ӑ в а ҫ ҫ ӗ, ӗ ҫ л е ҫ ҫ ӗ—тӗшши ҫакӑнта.

Капла калави пӗрре те писатӗл ҫав тӗшӗ ҫинче ҫеҫ чарӑнса тӑмала йе писатӗл лайӑх активиссене ҫеҫ кӑтартмала тенине пӗлтермест, апла калани схемӑ патне, шталог патне, „алгебрӑ паллисем" (Стецкий) патне чӗнни пулӗччӗ. Пурнӑҫа тарӑнӑн та сарлакан, чӗррӗн, темиҫе йенчен кӑтартас вырӑнне п у р н ӑ ҫ р а н м а р, ҫӑмӑлттай пуҫсенчен тухакан тенденцилӗ обрӑзсем пани—пролетариатшӑн усӑлӑ мар, сийенлӗ анчах пулма пултарать. Кӑна пирӗн, ҫамрӑк автӑрсен пушшех лайӑх астуса ӗҫлес пулать. Литературӑ—клас кӗрешӗвӗн спецификӑла орудийӗ, социалисӑм строитӗлствин спецификлӑ хатӗрӗ. Пролетариат ӑслӑлӑхӗн, пролетариат искусствин,—ҫав шутрах литературӑн та,—тӗп хӑвачӗ—тӗрӗслӗхре, пурнӑҫа тарӑн та тӗрӗс кӑтартнинче. Пролетариат ӑслӑлӑхӗ, пролетариат искусстви пурнӑҫа тарӑн та тӗрӗс, сарлакан та хӑйулӑн кӑтартма пултарни, вӑл—пролетариатӑн шухӑш-кӑмӑлӗсем, ӗмӗчӗсем п у р н ӑ ҫ ӑ н х ӑ й ӗ н прогреҫҫивлӑ уртӑмӗсемпе пӗрлӗхлӗ пулнинчен. вӗсемпе пӗр ҫыхӑра аталанса пынинчен килет. Социалисӑмла реалисӑмӑн пахалӑхӗ ҫакӑнтан тухса тӑрать ӗнтӗ.

Еллийĕв пултарулăхĕнче пурнăçа тĕрĕс мар çутатни уççăн курăнса тăрать. Автăр хăйĕн калавĕсенче, уйрăмах „Йышран уйрăлсан“-ра пирĕн пурнăçăн, пирĕн çынсен лайăх мар йенĕсем çине пусăмласа, вăл йенсене тем тĕрлех ӳстерсе, аслăлатса кăтартать, пирĕн пурнăçри, пирĕн çынсенчи тĕп туртăма, сывлăхлă, социалисăмлă, револьуцилĕ туртăма, çынсене социалисăмлă тăвас ĕçре чăн-чăн геройсем—Изотăвсем, Тапуковсем тăвакан туртăма начар курать, сахал курать. Ĕмĕр уйрăм харпăрлăх тăллисен тыткăнĕнче пурăннă хресченсене, хăйĕн килхушшинчи пĕр турпас таттишĕн вилме хатĕр пулнă хресченсене, Изотăвсем пулма хăват кĕнĕ. Вăл хăват—пролетари револьуцирен, вăл хăват—çынна çын експлоатаци тăвассине, пусмăрлассине пĕтернинчен, вăл хăват—ĕç ирĕкленнинчен, вăл хăват—коллективизаци никĕсĕ çинче пирĕн çĕршыври йулашки капиталисăмлă класа—кулаксене тĕп туса пынинчен, вăл хăват—Ленинпа Сталин партин виçесĕр хăватĕнчен. Пурнăçри çак туртăма, çак хăвата лайăх курмала ĕнтĕ писателсен.

Тĕлĕнмелех çав акă: Еллийĕв „Йышран уйăрăлсан“ калавра хăй çутатакан йалта колхоз пуррине... Х пайра анчах курать. Калаври çынсем унччен тем тĕрлĕ асапланаççĕ, тем тĕрлĕ „вичкĕнĕн“ шухăшлаççĕ, тем тĕрлĕ вĕтеленеççĕ, чакаланаççĕ хăйсем ăшĕнче, çапах та çав „чакаланнисенче“ йалта колхоз пурри кăшт сĕртĕнсе те пулин курăнаймасть. Калăнах çав: ӳчĕ çыннăн çĕр çинче, сывлăшĕ—пĕлĕт çинче, тейĕн.

Питтай арăмĕ—Чакак (кулак класĕн представителĕ) тата самогон сутĕçне—Чĕкеçе автăр хăшпĕр вырăнсемпе чылай тĕрĕс те чĕрĕ кăтартнă. Анчах кунта та тĕрĕс мар пусăмсем палăраççĕ. Сăмахран, Чакак ытла паттăр, ытла „вăйлă“, упăшкипе те, колхоз массипе те (массăна автăр питĕ пассивлă кăтартнă) ытла „чĕрре кĕрсе“, хăйне хăй питĕ пысăка хурса калаçать, хăй пуйан çемйерен тухнипе мухтанма халĕ те пăрахман Паллах, ку „тип“ хальхи вăхăтшăн „тип“ мар. Çавăн пекех Чĕкеç те ÇЕП сарăлнă тапхăршăн анчах „тип“, 1929-30-мĕш çулсемшĕн „тип“ мар.

Пĕтĕмĕшпе илсен Еллийĕвăн пултарулăхĕ, уйрăмах „Йышран уйăрăлсан“ калавĕ, пирĕншĕн чылай йенчен кăтартулă. Еллийĕвсăр пуçне епĕр те кунтан, уйрăмах—çамрăк автăрсем, пире кирлĕ уроксем илме пултаратпăр Вăл уроксем пире малашнехи ĕççенче, пултарулăхра та, йертсе пырас ĕçре те т. ыт. чылай пулăшма пултараççĕ.

**Пĕрремĕш урок**—вăл клаççиксенчен вĕренес тĕлĕшпе. Еллийĕв пирĕн шутпа вырăс клаççикĕсенчен, уйрăмах—Толстойран, Достойевскирен, Гогольран вĕренет. Калама çук аван. Клаççиксенчен вĕренес ыйту йулашки вăхăтра пирĕн чăваш совет литературинче те ĕнтĕ никçанхинчен

ҫивӗччӗн ҫӗкленсе пыма пуҫларӗ. Ку, тӗпрен илсен, епӗр малалах утнине пӗлтерет. Анчах пирӗн ҫав вӗренес тӗлӗшпе тухса пыракан ыйтусене малашне ҫутатса пани кирлӗ. Еллийӗв класҫиксенчен вӗренессинче йанӑш ҫулпа пырат̆. Вӑл класҫиксен ҫтилӗн йенӗсене, паллисене хӑй пултарулӑхне пӗтӗмӗшпе, ним сыхланусӑр, механисла куҫарса пырат̆. Вӑл йенсем, паллӑсем „алланмасӑрах" куҫни Еллийӗв пултарулӑхӗнче уҫҫӑнах курӑнат̆. Вӑл ӗнтӗ совет писатӗлӗ (Еллийӗв совет писатӗлӗ тенипе иккӗленме ҫук пирӗн шутпа) йут идеологин хӑшпӗр паллисемпе „чирлесе аптранине" пӗлтерет. Класҫиксенчен йулнӑ пурлӑха пирӗн револуцилӗ йышӑнмала, ӑна хамӑр витӗр револуцилӗ шӑрантарса кӑларса, хамӑра усӑлӑ тума вӗренмеле, пӗлмеле. Ҫтил вӑл пултарулӑхӑн ҫийелти йенӗ, ҫийелти майӗсем мар, произведенин материалне, содержанине, шухӑшӗсене тӗкӗнмен майсем мар (ӳн пек „формалиссем калаҫҫӗ, сӑмахран, пирӗн литературӑри Йалавин пеккисем) ҫтил вӑл, тӗпрен илсен, пурнӑҫ, содержани, материал, шухӑшсем (миросозерцани) организацилесе пынипе пулакан пулӑм. Ҫакна лайӑх, тӗплӗн пӗлни кирлӗ.

**Иккӗмӗш урок**—вӑл пурнӑҫри материалпа калӑпӑр, куҫ умӗнчи материалпа мӗнле усӑ курасси ҫинчен, „нимӗн витӗр тухман впечатленисем" ҫинчен, куҫ умӗнчи материал аллине тыткӑна лекнипе лекесси ҫинчен. Ак Еллийӗв ҫырат̆:

„Пирӗн йал активисӗсем те, активис маррисем те хӑйсене пӗр тӗрлӗрех. Вӗсем пурте ӑслӑн курӑнма йуратаҫҫӗ. „Ӑслӑн курӑнма" йуратни ҫак активиссене мӗнле лачакана илсе кӗрсе кайнине епӗр куртӑмӑр ӗнтӗ. Анчах пирӗн шутпа ҫак „пирӗн йалти" активиссем тенӗ сыпӑксем ӑнсӑртран йе автӑр чӑнахах та пур активиссене те хуратас тенинчен пулман. Вӑл сыпӑксем, пирӗн шутпа, пӗр йенчен, автӑр пултарулӑхра мӗнле майсемпе ӗҫленин пӗр паллине уҫса параҫҫӗ... Пултарулӑх процесӗнче автӑр хӑй тавра чӑн-чӑн пурнакан ҫынсене, чӑн-чӑн пулакан событисене йалан „асра" тытса тӑрат̆ пулас... Еллийӗв пултарулӑх процесне, пултарулӑх материалӗ тата ыт. ӑшне пурнӑҫ пӗтӗмӗшпе кӗмест, пурнӑҫӑн уйрӑм-уйрӑм йенӗсем, пайӗсем анчах кӗреҫҫӗ, хӑшпӗр чухнетата „ӑнсӑртран" пулакан йапаласем кӗреҫҫӗ... Паллах, пурнӑҫ ӑшне путмасӑр, йӗри-тавраri пурнӑҫ ӑшне практикӑлӑ чӑммасӑр нимӗнле ӗҫе те ӑнӑҫлӑ тума ҫук. Ахаль мар ӗнтӗ писатӗлсен пурнӑҫпа тачӑ ҫыхӑнмала тетпӗр, социалисӑмлӑ строитӗлствӑра вӗсен активлӑн ӗҫлеме кирлӗ тетпӗр. Анчах пурнӑҫ ӑшне „путни", вӑл—суккӑр, ачала ансӑр, сӑмса

айӗнчине ҫеҫ курма май параканла, емпирикле путни пулмала мар. Апла епӗр хамӑр пурнӑҫри, хамӑр ҫынсенчи кашни пӗчӗк хура палла типласа кӑтартма пултаратпӑр. Пирӗн пурнӑҫра ун пек хура паллӑсем чылай-ха—вӗсем пулман пулсан нимӗнле кӗрешӳ те кирлӗ мар пулнӑ пулӗччӗ.

Писатӗл куҫ-пуҫне, тӗрлӗрен сӑлтавсем пирки, хӑйӗн сӑмси айӗнчи емпирикле материал ҫеҫ лекни, паллах, пурнӑҫ ӑшне тӗрӗс „путни" ҫинчен каламасть: Ку ӗнтӗ пире, епӗр чылай йенчен ҫирӗп пулмасан, пурнӑҫа тӗрӗс мар ӳкерттерекен ҫулпа илсе кайасси паллах. Вӑл ҫулӑн пӗр йӳппипе уҫҫӑнах кӗрсе кайнӑ та ӗнтӗ Еллийӗв хӑйӗн „Йышран уйӑрӑлсан" калавра. Хӑй таврари ҫынсен, хӑйне сывӑх ҫынсен пҫихологинче чакаланса,. вӑл пҫихологине пурнӑҫран татса, уйӑрса, шалала кӗрсе кайса, пирӗн ҫынсенчи, пурнӑҫри тӗп туртӑма, револӈуцилӗ туртӑма, прогреҫҫивлӑ туртӑма, социалисӑмлӑ туртӑма курмасӑр хӑварнӑ. Пултарулӑх процесӗ йенчен илсе каласан, вӑл—индивидуалисӑмлӑ пҫихологисӑм аллине, хӑй таврашӗнче пулнӑ „начар" материал аллине лекнӗ темеле. Ҫынсен пҫихологинче чакаланни, хӑй таврашӗнчи материала ҫеҫ курни—пурнӑҫ ӑшне тӗрӗс мар „путни" пулать ӗнтӗ. Ун пек чухне час-часах етем тени пурнӑҫа, ҫӳре „путать" те, тухасса сывлӑш ҫинче, пӗлӗтре тухать...

**Виҫҫӗмӗш урок**—вӑл вулӈгарлӑ критиксем ҫинчен, писатӗлӗн мировоззренипе (конкретлӑрах: унӑн тӑвас тенӗ туртӑмӗпе) унӑн пултарулӑхне механисла ҫыхакансем ҫинчен, пултарулӑхра пӗр ӑс процесне ҫеҫ куракансем ҫинчен, произведенире, обрӑзсенче писатӗл хӑй шухӑшӗсене тӳртӗнех,—йапалана пӗр ҫӗртен тепӗр ҫӗре илсе хунӑ пек,—илсе хунӑ шухӑшсем ҫеҫ куракансем ҫинчен, пурнӑҫа хӑйне, пурнӑҫ писатӗле „тӗртсе" пынине, пурнӑҫпа писатӗлӗн спецификӑлӑ ҫыхӑнӑвне шута илменнисем ҫинчен.

Художӗствӑлӑ пултарулӑх—вӑл темиҫе тӗрлӗ „ҫыхланнӑ" процес, художникпе пурнӑҫ пӗр-пӗрипе темиҫе тӗрлӗн ҫыхӑннӑ процес. Кӑна пирӗн уйрӑмах питрех асгуса тӑмала, мӗншӗн тесен вӑл процес пирӗн условисенче,—писатӗлсен кулӈтурлӑхӗ, пӗлӗвӗсем, опыт т. ыт. ҫителӗклӗ мар пирки,—тата питрех „ҫыхланулӑ" пырать.

**Тӑваттӑмӗш урок**—вӑл РАПП-ӑн пултарулӑхри „диалектикӑлӑ материалисӑм метӑдне" пӗтернине—маркҫисӑм-ленинисӑма вӗренни писатӗлсен кирлӗ мар тенӗ пек ӑнланнӑ „паттӑрсем" пирки тухса тӑракан урок. Ун пек „паттӑрсем" пур пирӗн, сахалах та мар. Кун ҫинчен ӗнтӗ калама та именмӗле, анчах каласах пулать: маркҫисӑм-ленинисӑм философине пирӗн лайӑх пӗлмеле,—ку пирӗн умри задача

викам та „пĕтерме“ пултарайман та, пултарас та çук. РАПП-ăн „хуйхи“ çинчен калас пулсан, вăл-ак мĕнре пулнă: РАПП-а йертсе пыракансенчен хăш-пĕрисем диалектикăлă материалисăм метăдне пĕтĕмпех урăхла йапала туса йанă пулнă—вĕсен аллинче вăл метăд диалектикăлă материалисăм метăчĕ пулма пăрахса, деборивщинă пулса кайнă, теорине практикран уйăрни пулса кайнă.

РАПП-ăн „диалектикăлă материалисăм метăчĕ“—пирĕн çĕршыв практикине, пирĕн çĕршывра пулса пыракан улшăнусене манăçа хăварнинчен—пĕр йенчен, искусствăн спецификине тивĕçлĕ таран шута илменнинчен—тепĕр йенчен, тухса тăнă. Социалисăмлă реалисăм лозунгĕ писатĕлсене пурнăç патне чĕнет. Писатăл пирĕн пурнăçпа таччăнах çыхăнса, ăна чăн-чăнах тĕрес çутатма, кăтартма тăрăшат пулсан, вăл пурĕпĕрех маркçисăм-ленинисăм патне пырса çитет; çавăнпа ăна теорипе те хăвăртрах çавăрса илес задачă ç вăнтанах килсе тухат,—çакă пулат ĕнтĕ вăл РАПП-ăн „идеалисăмла-диалектикăла“ калаçăвĕсене „пĕтерни“.

**Пиллĕкĕмĕш урок**—интеллигентла-толстойла чĕре, таппипе хресченле стихийă тата националисăмла шухăшсен йулашки „пĕрчисем“ палăраççех Еллийĕв пултарулăхĕнче. Йут идеологии паллисем ытти хăш-пĕр писатĕлсен пултарулăхĕсенчен те тухсах пĕтеймен-ха. Оргкомитетăн, маркçисла критикăн задачи—йалан сыхă пуласси, хăй вăхăтĕнчех вăл паллăсене либералла çемçелмесĕр уçса кăтартасси, çапла туса вăл пи атĕлсене йут паллăсенчен çăлăнма, тасалма пулăшасси. Çамрăк писатĕлсемпе ĕçленĕ çĕрте ку задачă уйрăмăнах ытти задачăсенчен уйăралмасăр тăрат.

Çапла уроксем илмеле пирĕн Еллийĕв пултарулăхне пăхса тухнă майăн

Малала,

Çамрăк писатĕлсем çинчен туллирех калас тесеççĕн, вĕсен пултарулăхĕнчи тĕшĕллĕрех вырăнсене кăтартмала пулсассăн, тата Кăтра Мишша çинче чарăнса тăма кирлĕ пек пирĕн шутпа. Унăн пултарулăхĕ çинчен чарăнса тăнă майăн пирĕн тата хăш-пĕр творчĕствăлă ыйтусем çинче, сăмахран, произведенисенчи детальсем çинче, чарăнса тăма шут пур.

Кăтра Мишша çырнисенчен паллăраххи вăл—„Уйăх ансан“ йатлă калав Вал калавра автар пĕр комсомолĕс кулак хĕрне йуратни çинчен, çав йурату майĕпе комсомолĕс колхоза хирĕç пыракан çын пулса кайма пуçлани çинчен çырса кăтартат. Автăр калава чылай аван тӳлесе салтса пырат, калавăн чылай вырăнĕсем ĕневтерӳлĕ çырăннă. Анчах автăр материйала хăй аллине çирĕппĕнех çавăрса илме вĕренсех çитеймен-ха, уйрăмах—детальсене кăтартас çĕрте уксаклат: пĕр çĕрте вĕсене лайăх ĕневтерӳлĕ кăтартат, тепĕр çĕрте веçех урăхла, çителĕклĕ кăтартаймаст.

2. Çамрăк писатĕлсен пултарулăхĕ

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

Акӑ чылай самай кӑтартнӑ психологилӗ деталҫсем:

„Шухӑшламали татах вумаййчӗ-и тен. Анчах уй хапхине пырса кӗрсенех Лҫавасен ула йытти тапӑнса вӗрни шухӑша таҫтала салатса йачӗ".

„Йунашар ларакан Ҫомкӑна сӑмах чӗнтересшӗн каларӗ вӑл ҫакна. Сӑмах-йумах пуҫласа йарасшӑн. Ҫапах та ӑвӑс ҫулҫисем шаклаттарнипе (ку аплах, тӗрӗсех мар. В. Р.) ҫемҫе питӗнчен йӑваш ҫил ҫуласа кайнисӗр пуҫне вӑл урӑх нимӗн те туймарӗ. Ниҫта кайса кӗме пӗлмен, вут пек ҫувса тӑракан куҫӗсем Ҫомкӑ ҫипчен айаккала пӑрӑнчӗҫ. Ҫав тери ачашласа вӗрекен йӑваш ҫил те тӑр хӗлле вӗрекен хайар ҫил пек туйӑнса кайрӗ".

Ҫапла лайӑх асӑрхаса кӑтартнӑ психологилӗ деталҫсем „Уйӑх ансан"-ра татах та пур. Автӑр ҫак сыпӑксенче хӑйӗн калаври персонажсен шухӑш-кӑмӑлӗсем аталанса пынине вӗсен таврашӗнчи пурнӑҫӗнчен татса кӑтартмаст; „пӗчӗк" деталҫсем—анчах ҫакӑ тӑвать те ӗнтӗ калава ӗнентерӳлӗ, пурнӑҫлӑ. Вӗсем ӗнентерӳлӗ, пурнӑҫлӑ пулнинчен персонажсем, геройсем пӗтӗмӗшпе пурнӑҫлӑ, ӗнентерӳлӗ художӗствӑлӑ, чӗрӗ пулни нумай килет те ӗнтӗ. Пирӗн ҫамрӑк автӑрсем (хӑшӗсем „ваттисем" те) произведенисен деталҫӗсем йенне, деталҫсене те пурнӑҫлӑ, чӗрӗ, ӗнентерӳлӗ тӑвас йенне начар пӑхаҫҫӗ. Критиксем пирки каласан та ку сӑмахсем тӗрӗс пулаҫҫӗ. Епӗ хам произведенисен ҫак йенне ҫителӗклӗ таран тишкӗрнӗ пӗр критикӑлӑ статйа та курман вара. Ҫав вӑхӑтрах деталҫсем произведенире калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Пӗр ик-виҫ ҫӗрте ҫеҫ те деталҫсене тӗрӗс мар кӑтартни те, йе вӗсене тӗплесех ҫитерейменни те произведенин чӗрӗлӗхне, тӗрӗслӗхне, художӗствӑлӑ пӗрлӗхне пӑсса пӑрахать.

Ак „Уйӑх ансан"-ри тӗрӗсех мар; тӗпленсех ҫитеймен хӑш-пӗр деталҫсенех илер:

„Хытӑ хӗртет тӳпери сар хӗвел. Ҫунтарсах йарать. Ун пек чух вара такам та, уй урлӑ тулли лавпа каҫмала пулсан, лав вӑрахӑн шунӑ майӗпе шухӑша путать".

Пӗр йенчен—„такам та" тени тӗрӗс мар, кӑна конкретлӑрах каламала пулнӑ, тепӗр йенчен—„шухӑша путать" тени ӗнентерӳсӗртерех, кӑна тӗплӗрех тӗплемеле пулнӑ, мӗншӗн тесен вулакан хӗвел хӗртсе ҫунтарса пӑхнӑ чух шухӑша путассинчен питрех аййах килнине нумайтарах асӑрханӑ.

Ҫав сӑлтав пиркиех ак ҫак деталҫ те ӗнентерӳсӗр.

„Канать кӗтӳ. Кӑвтӑр канни канать. Кӗтӳре пушмак пӑру ҫеҫ ывӑнман мӗн. Канмаст вӑл. Шӑрӑхра чупас килет ун".

Çавăнтах:

„Хӳрине тăратнă. Урисене тăп-тăп пускалать. Ак ĕрĕхсе тухса кайрĕ вăл кĕтӳрен. Ватă ĕнесем те тапранчĕç ун хыççăн".

Мĕншĕн тапраннă-ши „хисеплĕ" „ватă ĕнесем" „шăрăхра та чупас килнĕ" çăмăлттай пăру хыççăн?.. Тен ӳпре пăван аптратнă пулĕ кĕтĕве?! Апла пулсан, çапла никĕслемеле пулнă та.

Ĕнентерӳсĕр, тĕпленмен деталҫсем пирĕн произведенисенче нумай темеле. Ку епĕр васкаса ĕçленине, хамăр мĕн çинчен çырас тенине лайăх, тĕплĕн вĕренменнине пĕлтерет. Хăш-пĕр чухне пирĕн автăрсем ку тĕлĕшпе мыскаралă йапаласемех тăваççĕ.—малашне кун çине уйрăмăнах тимлесе пăхни кирлĕ. Каласу (диалог) искусстви çинчен те çаплах каламала.

„Уйăх ансан"-ра Кăтра Миша тĕп геройа Ивана самай маçтăрлăхпа кăтартнă. Вăл çаплах чĕрĕ тухнă. Анчах автăр хăй умĕнче тăнă задача вĕçне çитерни чĕнех татса парайман темеле.

Калавăн тĕп вырăнĕ çакăнта: Иван—комсомолĕс кулак хĕрне—Аҫука йуратать, Аҫук ик-виç çул ĕлĕкрех Ивана „кĕлĕмçĕ" тесе чĕнсе пурăннă, халҫ вăл—ашшĕ-амăшпе пĕрле—Ивана йуратанçи пулать, улталать Ивана. Ивн кăна маларах сисмест, кайран сисме пуçлать, сисет. Çав вăхăталлах колхозпа йалсоветăн пуххи пулать, Ивана ӳкĕнтереççĕ, Иван ӳкĕнет, каллех лайăх комсомолĕс, лайăх активис пулса кайать.

Халҫ ĕнтĕ вулаканăн ыйтас килет мĕн пулнă пулĕчĕ-ши Иванпа ăна Аҫук чăннипех йуратнă пулсан, чăннипех ăна качча тухма хатĕр пулнă пулсан, чăннипех ăна Аҫук ашшĕ пуйан кĕрӳ тума хатĕр пулнă пулсан? Вăл ун чухне те Аҫукпа çавăн пекех татăлĕччĕ-ши йе вăл тĕвĕ урăхла салтăннă пулнă пулĕччĕ-ши? Вĕт йуратаканçи пулакан Аҫукпа Иван—комсомолĕс, Иван—батрак çеç мар, кашни çынах çапла татăлнă пулĕччĕ?! Иван—комсомолĕсăн, Иван—батракăн (ĕлĕкрех вăл батрак пулнă) вăйне, социаллă тĕреклĕхне кăтартайман автăр Вăл хăй умне чылай интереслĕ проблемă лартнă, анчах ăна туллирех тĕплеме хăйулăх çитеймен кулвать автăрăн.

Феодăрăвпа Лазăрĕва чĕрĕ мар кăтартнă Кăтра Миша. Вĕсем çинчен автăр хăйĕнчен анчах пĕлтерет, çамахран:

„Лазăрĕв рабфакра вĕренекен çамрăк,' уастар комсомолĕс. Ашшĕ граждăн варçинче вилнĕ. Хăй мĕн вĕренме кайиччене кĕтӳре çӳренĕ".

Çамах майăн, вĕçĕ-хĕррисĕр „кĕтӳçĕсем" çинчен... Пирĕн автăрсем нумай чухне, тӳррипе каласан, кĕтӳçĕсемпе усал ĕç тăваççĕ. Чăн, кĕтӳçĕсем уйрăм харпăрлăхлă йалта про-

летарилӗ елементсем пулнипе вӗсем йалти тӗреклӗ ҫынсене кӑтартма чи килӗшӳлӗ ҫынсем пулса тӑраҫҫӗ. Анчах кашни произведенирех пур тӗп положительнӑй геройсем ӗлӗкхи вӑхӑтра йе кӗтӳҫ, йе пӗр-пӗр тӑлӑх пулни,—ку ӗнтӗ, йулташсем, пӗр йенчен, **лайӑх хисеп начар пахалӑх** пулса кайнине пӗлтерет, тепӗр йенчен, пирӗн художӗствӑлӑ вайсӑрлӑха та кӑтартать.

Кӑтра Мишшапа Еллийӗвсӑр пуҫне ҫак икӗ ҫул хушшинче пирӗн чӑваш совет литературине тата та нумай вӑйсем хутшӑнчӗҫ. Вӗсем, пӗтӗмӗшпе илсен, пурте революци хуравӗнче вӗресе, социалисӑмлӑ ҫӗнелсе пыракан йал синчен ҫыраҫҫӗ. Вӗсенчен хӑш-пӗрисем ӗнтӗ (Кипек, Саламбек Уйар Ив Моис тата ыт.) хӑйсен пултарулӑхне чылай пысӑк вырӑна ҫитерчӗҫ Вӗсен произведенисен усӑлӑхӗпе художӗствӑлӑ пахалӑхӗ вулакансене хӑйсем йенне чылай илӗртулӗ ҫавӑрма пуҫларӗҫ

Чӑваш йалӗнче социалисӑм ӳсни—пирӗн литературӑшӑн—иксӗлми чӗрӗ темӑ. Ҫамрӑк автӑрсем пуринчен ытрех ҫамрӑксем ҫинчен, комсомол ҫинчен, унӑн колхозри, бригадӑри ӗҫӗ синчен ҫыраҫҫӗ. Ҫав хушӑрах вӗсем йурату мотивӗсемпе интересленеҫҫӗ Йалта ҫӗнӗ хутшӑнусем, ҫӗнӗ ҫынсем ҫурални йал ҫынниниче киввипе ҫӗнни йепле кӗрешсе, ҫапӑҫса пыни, клас тӑшманӗ—колхозра, колхоз тулашӗнче йепле „сӑрпаланни", йединоличник мотивӗсем т. ыт.—пурнӑҫӑн ҫак йенӗсем пирӗн тематикӑра тӗп вырӑн йышӑнса тараҫҫӗ. Хӑш-пӗр ҫамрӑк автӑрсем совет интеллигенци проблемисене те хускатаҫҫӗ (Кипек).

Анчах пирӗн тематикӑ ҫаплах ансӑртарах-ха. Йал ҫинчен ҫырнӑ чухне те час-часах епӗр **пӗр йала** анчах, колхозниксене хресченсене анчах куратпӑр, йала пролетариат йертсе пынин паллисем пирӗн произведенисенче сахал курӑнаҫҫӗ. Сыхлӑх ыйтӑвӗсене, пирӗн революци, пирӗн строителствӑ **интернационалисӑмлӑ** тӗшӗрен ӳсемне те епӗр сахал ҫутататпӑр т. ыт. Кусем, паллах, пирӗн формӑ тематика ансӑрлӑхӗ ҫинчен ҫеҫ мар, пирӗн идейлӑ-художӗствӑлӑ хисеп ҫаплах-ха тивӗҫлӗ вырӑна ҫитменни ҫинчен те калаҫҫӗ.

Пӑртак тата пирӗн образсем ҫинчен пӗтӗҫтерӳлӗ илсе калани кирлӗ.

Пирӗн ҫамрӑк автӑрсем образсем ҫинчен час-часах хӑйсенчен пӗлтереҫҫӗ. Малтанхи йӗркесенчех вулакан пӗлет: акӑ ку лайӑх ҫын, пирӗн; акӑ ку—начар ҫын, пирӗн мар. Анчах вулакан ӗненмест, вӑл писатӗлтен художӗствӑлӑ кӑтартвине, ӗнентерние ыйтать, „шекҫпирла чӗрӗлех" ыйтать. Епӗр хамӑр произведенисене час-часах **тӳртӗн калакан ӑспа ҫыратпӑр; кӑмӑлтан, чӗррӗн кӑтартакан ӑспа мар.**

Произведенинче кăтарту пулсан, вăл каллех пирĕн чаc-часах хăрах айкилĕ кăтарту анчах пулса тухать. Геройсем пирĕн социаллă йединицăсем анчах пулса тухаççĕ. Ун пек чухне вара положительнăй геройсем пĕр пите чăмăрта-наççĕ, отрицательнăй геройсем—тепĕр пите. Геройсем хушшинчи индивидуаллă уйрăмлăха, чĕрĕлĕхе, конкретлăха кăтартма пĕлмевни вумăй автăрсемшĕн характерлă.

Обрăзсем пĕр вырăнта хытса тăни çинчен пĕр-ик сăмах: произведени пуçламĕшĕнче герой мĕнле хисепре тăнă, произведени вĕçĕнче вăл çаплах йулать—çакă та пирĕн пит пысăк çитменлĕх. Тĕслĕхрен, социализăм строителствин геройĕсене кăтартнă чухне епĕр вĕсен ÿсĕмне, вĕсем пурăннăçемĕн ĕçленĕçемĕн малала ÿснине питĕ сахал кăтартатпăр. Йе веçех кăтартмастпăр. Акă „Сунтал"-ра Уйарăн „Кĕрхи каç" йатлă калав çапăннă. Калав, пуçлакан автăршăн—начар мар темеле. Вăл калавра Уйар социализăмла пурлăха сыхлакан колхозник—хуралçа кăтартнă Анчах автăр пĕр ик-виç сул ĕлĕкрех çеç уйрăм—харпăрлăх турри хушнипе пурăннă колхозник халĕхи вăхăтра социализмлă пурлăха сыхлавă çĕрте вилме те хатĕр пуличченех мĕнле ÿссе çитĕннине нимĕн урлă та кăтартман Уйар хăй геройне вăл çак вăхăтра мĕнле пулнине çеç илсе кăтартнă, анчах çак вăхăтра иртнĕ вăхăтăн паллисене курса илеймен.

Геройăн пайанхи тапхăрĕ ĕнерхи тапхăрпа хатĕрленнĕ—ку факт çуталман калавра Герой—хуралçă, герой хресчен емĕр ĕмĕрех çапла герой пулнă пек тухнă,—çавăн пирки калавăн ĕнентерÿлĕхĕ çителĕксĕр.

Геройсене чĕрĕ тăвасси çиве, аталанура кăтартасси çине пирĕн эимлерех пăхмала.

Геройсене кăтартассинчи тепĕр çитменлĕх вăл—вĕсене час-часах официаллă вырăнсенче кăтартни: пухусенче, конференцисенче—геройсем хăйсем калакан самахсем урлă. Вăл сăмахсем тата йаланах политикă тĕлĕшĕнчен тĕреклĕ пулаççĕ, хăш-пĕр чухне—ура-революцилĕ çатăлтатусем. Сăмахран, „Тăвала"-ра Малтинпа Кĕркуçа çапла кăтартнă. Ку геройсен мĕн пур ĕçĕ те çатăлтатьнче анчах. Автăрĕ вĕсен çатăлтатнине итлесе савăнса хытсах кайнă,—ку пушшех начар.

Пирĕн хамăр геройсене пур çĕрте те курма вĕренмеле; официаллă вырăнсенче те, кулленхи ĕçре те, çемйере те т. ыт. Çын ĕçре мĕнле ĕçлени, çемйинче мĕнле пурăнни, кÿршĕсемпе, йулташĕсемпе мĕнле пурăнни, хăй тавра пурăнакан-тăракан йапаласем çине мĕнле пăхни т. ыт.—пурте вĕсем пĕрле пурнăçăн чĕрĕ çăмхи пулаççĕ. Пирĕн çав тĕлĕнмеле пысăк та „сыхланулă" çамхана ăнаçулă, чĕррĕн, урăм-сурăм таткаламасăр сÿтсе пыма вĕренмеле. Кунтах тата çакна каласа хăварни кирлĕ: çамрăк автăрсем

чылай чухне хӑйсен геройӗсене сахӑрлатса, пылаклатса, идеализацилесе кӑтартаҫҫӗ; сӑмахран, колхозниксене кӑтартнӑ чухне, колхозниксен нимӗнле уйрӑм-харпӑрлӑхлӑ туртӑмсем йулман пек кӑтартаҫҫӗ. Ку авторсем, ҫапла вара, иккӗмӗш пйатилеткӑн задачисене манӑҫа хӑвӑраҫҫӗ Колхоз, йалсовет председательӗсем, колхоз ударникӗсем, пӗтӗмӗшпе илсен, социалисӑмлӑ йалӑн чи малта пыракан ҫынсен шутӗнче тӑраҫҫӗ. Ку вӗсенче—чи хакли, чи тӗппи,—кӑна манви Еллийӗв ҫулӗпе анчах илсе кайма пултарат. Анчах пире схемӑ патне, йакатса, савалаça кӑтартасси патне илсе кайакан ҫул та кирлӗ мар. Апла туни хамӑра хамӑр улталани, пурнӑҫа тепӗр йенчен пӑсса кӑтартни анчах пулат.

Пӗтӗм Сойузри Оргкомитетӑн йулашки пленумӗ, хӑйӗн ӗҫӗсене А. М. Горйки статйисемпе ҫыхса, пахалӑх ыйтуне уйрӑ ах ҫивӗччӗн лартрӗ. Пирӗн условисенче вӑл ыйтӑва тата пушшех ҫивӗчлетмеле. А. М. Горйкин чӗлхе пирки ҫырнӑ статйисене формалисӑмла ӑнланмала мар.

Унӑн статйисем хӑш пӗр уйрӑм-уйрӑм ӑнӑҫусӑр сӑмахсем ҫинчен ҫеҫ каламаҫҫӗ, вӗсем пахалӑх ыйтуне пӗтӗмӗшлӗн ҫивӗчлетеҫҫӗ.

Малала пирӗн литературӑн йулса пыракан фрончӗ—поэзи ҫинчен

Декламаци, хӑйне хӑй нимӗнпе те никӗслемен риторикӑ, Майаковскин лозунглӑ сӑввисене ҫӗнӗрен рифмӑлани, обрӑзлӑ системӑна сухатни—ҫакӑ пирӗн пайанхи поэзия пӗр тӗп ҫитменлӗхӗсенчен пӗри пулса тӑрат. Куя ҫинчен пирӗн мӗн пур тӳрӗлӗхпе каламала

Шупуҫҫынни, Полоруссӑв—кусем такҫантанпах ҫыракан поетсем—вӗсемшӗн те йулашки тапхӑрта ҫавах характерла.

„Совет ҫӗршывӗн мӗн ҫитмест,
Мӗнрен малта хӑш-хӑш патшалӑх?
Мӗншӗн авалхи йӗр ҫитмест?
Мӗншӗн хуллен куҫат хуҫалӑх?

Совет патшалӑх политикран
Мӗн пур патшалӑх урлӑ пусрӗ.
Анчах пит йапӑх техникран
Шуйтан пек йулнӑ-ҫке индустри".
(Шупуҫҫынни, „Йӑран"—Пйатилеткӑн виҫҫӗмӗш)

Малала тата ҫавах.

Миттана илес пулсан, уншӑн риторикӑ тени, „Савни парни"-рен пуҫласа пайанхи куна ҫитиччен характерлӑ. Ҫапла вара пирӗн ҫамрӑк поэтсем ӗлӗкрех ӗҫлеме пуҫланӑ поэтсенчен лайӑх тӗслӗхсем сахал илсе пыраҫҫӗ.

Пурнӑҫа ҫийелтен тата поезирен ытларах риторикӑлӑ анчах кӑтартни ҫак йулашки вӑхӑтра тухнӑ сӑвӑ сборникӗсемшӗн пуриншӗн те характерлӑ („Малтанхи парне"—Пушкай, Каттай, Вашки, Ҫита, Малгай сӑввисем; Ҥамаҥӑн икӗ сборникӗ, Ӗҫхӗл, Усли, Пушкай сборникӗ т. ыт.).

Пурнăçа таранăн та чĕррĕн кăтартас вырăнне çамрăк поэтсем (хăш пĕр „ваттисем" те, час-часах, социалисăм усĕмĕпе пĕрле аталанса тухнă фактăрсене, сăмахран, тракторсене, комбайна, електричĕствăна т. ыт. çийелтен кăтартни пех çураçаççĕ. Вăл фактăрсем колхозникăн, ĕçхресченĕн психологиве, шухăш-кăмăлне улăштараççĕ, çĕнетеççĕ—çак тарăн процеса пирĕн поэтсем питĕ çителĕксĕр кăтартаççĕ. Трактăра, комбайна, çилçувана т. ыт. час часах пĕтĕмĕшлĕ трафаретлă сăмахсемпе „сăвапласçĕ".

Чылай çамрăк поэтсем кашни сăвăрах социалисăмла уй-хир, улăхсен, вăрмансен савăнăçĕ çинчен, ирĕклĕ ĕç савăнăçĕ çинчен çыраççĕ, анчах каллех... пĕтĕмĕшлĕ сăмахсемпе, чĕррĕн, конкретлăн, обрăзлăн мар. Парти, рабочи клас, пур ĕççыннисем вăл савăнăçа тĕлĕнмеле паттăрлăхпа ĕçлесе, темиçе тĕрлĕ йăвăрлăха çĕнтерсе, кĕрешсе илнĕ, илеççĕ—çака чĕррĕн сахал курăнат пирĕн сăвăсенче, çавăнпа пирĕн сăвăсен массасене организацилекен мобилизацилекен хăвачĕ сахал.

Анчах капла каланисем пĕрре те пирĕн поэзи кризис картине кĕнĕ тенине пĕлтермеççĕ. Кризис тени пирĕн поэзире сывлăхла, чĕрĕ туртăмсем çук тени, пирĕн поэзин çулĕ хупăнвă, тени пулĕччĕ. Пирĕн поэзири çитменлĕхсем—усĕм йăвăрлăхĕсем пулаççĕ. Кăна: пирĕн поэзи—кризисра, тесе çăмăлттайла лăпăртатакансемшĕн каласа хăваратпăр. Пĕтĕмĕшпе илсе каласан, пирĕн пайанхи поэзи çинчен çапла каламала: пирĕн поэзире, ăна прозăпа танлаштарсан, хресченле-нациле хĕсĕклĕх халĕ те чылай—ку пĕрре; вăл хальхи вăхăтри социалисăм строительствине кăтартма тивĕçлĕ çĕнĕ формăсем шырат—ку тепре.

Каласах пулат: хăш-пĕр поэтсен нациле-хресченле хĕсĕклĕхрен тухса пыни, çĕнĕ формăсем шырани тĕрĕс çулпах пымаст. Политикăлă лозунгсене сăвăла йĕркелесе кайнипе агитатăр хăйне хăй çийелтен мĕнле тыткаланă пек тăма тарăшса ЛЕФ-ăн ĕлĕкхи сăввисене кайа йулса тепĕр хут йĕркелени—пĕрре те тĕрĕс çул пулас çук.

Кувта РАПП-ăн çав шутрах ЧАПП-ăн та, хăшпĕр ĕçлекенĕсем поэтсене лефла-литфронтла рецептсем пани те хăй „ĕçне" туна ĕнтĕ. Пирĕн условисенче çав рецептсем, „теорисем" халĕ те-ха пĕтсех çитеймен. хăш пĕр чухне вĕсене уççăнах илгме пулат—кăна та каласа хăварма кирлĕ.

Анчах йулашки вăхăтра поэтсенчен хăшпе-пĕрисем çухрашулă-лозунгла поэзирен усси сахаллине сисе пуçларĕç пулас. Çамрăк поэтсем çинчен калас пулсан, Каттайăн „Ишекĕ", Пушкайăн „Октабĕр йалавĕ",—Ваçкин, Деферанăн йулашки хăшпĕр сăввисем çав çухрашула-лозунглă поэзирен пăрăнма пуçлавипе совет поэзин спецификине тĕрĕс çулпа йĕрлениве пĕлтереççĕ.

Поэзиве кĕрсе пыракан хăш-пĕр çамрăксем тÿрех те çав йăнăçлă çул çине тăраççĕ. Сăмахран, „Ç. К." 30-мĕш номĕрĕнче çапăнса тухнă Азархин „Çамрăк учитĕл" йатлă сăввине вуласа пăхсан та, йна лайăхах туйса илме пулаť. „Çамрăк учитĕл" сăнĕ вăл сăвăра вулакан умне чылай чĕррĕн тухса тăраť.

Риторикă вăл пирĕн условисенче—илемлĕ сăмахсен купи.

Риторикă вăл—обрăзсăрлăх. Риторикă вăл—конкретлăх çукки, сăмах йумах „воопче" пыни. Пире обрăз кирлĕ. Поет пурнăçа чĕррĕн, чĕрĕ çынсем урлă, чĕррĕн сăнласа, туйăмлă кăтартни кирлĕ.

## Пирĕн хăшпĕр задачăсем.

Литературăна çамрăк вăйсем кĕрсе пыни йулашки çулсенче татах та сарăлса тарăнланса пыма пуçларĕ. Пĕтĕмĕшпе илсе каласан, вăл—пирĕн социалисăм строитĕлстви тарăнланнăçем тарăнланса пынине пĕлтерет, конкретлăн каласан—вăл пирĕн çĕршывăн ĕçмассисен кулÿтурлăхĕ ÿсиĕçем ÿссе пынине пĕлтерет.

Литературăна социалисăмлă ĕçĕн удар икĕсем кĕрсе пыни, пирĕн кĕнеке кăларакан уйрăмсем ĕлĕкхи класçиксен тата совет писатĕлĕсен кĕнекисене çапса кăларас ĕçре çĕнĕ вулакан ыйтнă чухлĕ нийепле те çапса пыма ĕлкĕрейменни, формăпа нацилĕ, содержанипе социалисăмла литературăсем (вĕсенчен нумайĕш Октабĕр революци хыççăн анчах аталанма пуçланă), вĕсем хушшинче чăваш литератури те, халÿхи вăхăтчен хăйсен ĕçĕсенче чи малта пыракан литературăсен чĕлхине куçарма та май пур произведенисем çĕнсе илни,—кусем ĕнте Совет сойузĕнчи ĕççыннисем социалисăм тăвас ĕçре искусствăн спецификăлă майĕсене вăйлăнах çавăрса илнине кăтартаççĕ Социалисăм тăвакан ĕçмассисем ку таранччен етемлĕх хăй практикинче „купальса пынă" пĕлÿсене критиклăн çавăрса илсе, вăл никĕс çинче хăйсен чăн-чăн революцилĕ ăслăлăхне, искусствине тăваççĕ. Стецки йултăш А. С. Пушкина пирĕн çĕршывра ĕçмассисен йуратакан поечĕ тесе каланă, — ку ĕнтĕ çав каламла çук тĕлĕнмеле пысăк процесăн пĕр тĕшĕлĕ йевне палăртни пулнă ĕнтĕ.

Анчах епĕр хăш-пĕр чухне çакна кирлĕ таранах шута илейместпĕр, вăл процес пирĕн ума килсе тăратакан задачăсене çителĕклĕ таран пурнăçа кĕртсе пыраймастпăр.

Литературăн çамрăк кадăрĕсемпе ĕçлесе пырас задачă пирĕн умра çивĕччĕн тăраť. Анчах, тÿрех калас пулаť, Чăваш Совет писатĕлсен Оргкомитечĕ ку задача начар пурнăçласа пыраť. Вăл ĕçре пирĕн конкретлăх, йĕркелĕх питĕ çителĕксĕр. Кунта, ытти ĕçсенчи пекех, епĕр хамăр лит-

организацине партин апрелĕн 23-мĕшĕнчи постановленийĕ хушнă пек çĕнĕлетсе, урăхлатса çитерейменни лайăх сисĕнет. Хамăра хамăр цехла питĕрнĕ пирки, самокритикăпа критикăран шикленерех тăнă пирки, теорире те, практикăра та вулгаризатăрлă туртăмсемпе çителĕксĕр кĕрешнĕ пирки—РАПП организацисен çак вачар йенĕсенчен епĕр халĕ те хăтăлсах çитеймен-ха Йулашки вăхăтсенче çеç Оргкомитет, пирĕн çитменлĕхсемпе йăвăшсем çине партии Чăваш Обкомĕ темиçе хут та кăтартса панă хыççăн, ку тĕлĕшпе хытăрах ĕçлем пуçларĕ. Йалавин, Краснов-Кĕçĕнни т. ыт. нимĕнле принципсăр, группăлă. вулгаризатăрлă калаçăвĕсемпе шухăшĕсене тăрă шыв çине кăларни, Талвирпе Йуманăн „Ылттăн ту" йатлă произведенийе, Макçимăв-Кошкинскин „Сатурпа Илем" йатлă драмине, Пушкай, Каттай, Вашки поетсен пултарулăхне сарлакан сутсе-йавни—литорганизацин ĕ.не чĕртсе йарассинче, ăна çĕнетессинче самай палла утăмсем пулчĕç.

Пирĕн литературăра, ĕçре çитменлĕхсемпе йăнăшсем нумай. Вăл çитменлĕхсемпе йăнăшсене пирĕн çуттăн уççа кăтартма кирлĕ, вĕсене пĕтерме кирлĕ. Кăна пирĕн литературă умĕнче тăракан пайанхи задачăсем сивĕччĕн ыйтаççĕ. Çавăн пекех кăна, уйрăмах калас пулат, пирĕн çамрăк кадăрсен пултарулăхĕ те ыйтат.

Пирĕн литературă аталанăвĕн тĕп çитменлĕхĕ вăл, паçăрах каларăмар—пурнăçа çийелтентерех кăгартни, чăваш совет писателĕсем хушшинче пултарулăхлă социалисăмлă ăмăрту ку таранччен те кирлĕ пек саланса кайайманни. Ку çитменлĕхсене „никĕслекен" сăлтавсем нумай ĕнтĕ, анчах тĕп сăлтавсенчен пĕри кунта—пирĕн Оргкомитет хăйĕн ĕçне çĕнетес, урăхлатас ĕçре чи йулашки вахăтчен вăл тĕрĕс çул çине тăма хăват çитерейменни пулнă—кун çинчен çирĕппĕнех калас пулат.

Ĕçе çĕнетес, урăхлатас ĕçри пĕртен пĕр тĕрĕс çул вăл—хамăр ĕçсем çине,—иртнĕ ĕçсемпе хальхи ĕçсем çине те,—самокритикăла, критикăла пăхни, пирĕн чăн чăн çитменлĕхсемпе йăнашсене конкретлăн уçса кăтартни пулат. Çитменлĕхсемпе йăнăшсене конкретлă кăтартмасăр малалахи çула уççăн курма, картса хума май çук, ĕçе çĕнетме, урăхлатма май çук

Ун йырăвне мĕнле çулпа пынă-ха Оргкомитет чи йулашки вăхăтченех? Петтоки йул. вăхăтĕнче христианла касару çулĕпе пынине епĕр пурте пĕлетпĕр. Анчах вăл йăнăш, либералла çултан, тĕпрен илсен, епĕр кайарахпа та хăтăлаймарăмăр. Ун çинчен Шупуççынин, Оргкомитетăн ыт. те членĕсен йăнăшĕсем те уççăнах калаççĕ. Тата çакна астуни кирлĕ: епĕр вулгаризатăрсемпе вулгаризаци çинчен статйасем çыратпăр, анчах пĕр статйара та тенĕ

пек вĕсем çинчен конкретлăн каламастпăр, уçса кă- тартмастпăр. Кам статйисенче, мĕнле статйасенче, пи- рĕн практикăн хăш йенĕсенче сисĕнеççĕ, пурнаççĕ вулђга- ризатăрлă туртăмсем—çакна сахал кăтартатпăр йе веçех те кăтартмастпăр Самокритикăпа критикă урлă ха- мăр çитменлĕхсемпе йăнăшне уçса кăтартса, ĕçе çĕнетсе урăхлатас вырăнне Оргкомитетăн хăш-пĕр членĕсем „пирĕн перестройкăва вĕçне çитересси çеç" йулнă тесе ĕçре канлĕх сывлăшне сарнине, группăлă туртăмсемпе çителĕклĕ таран кĕрешменнине тата партин постановле- нийĕ литорганизаци формине анчах, содержанине тĕкĕн- мест теме тăракан туртăмсене хăй вăхăтĕнче сирсе пăрах- маннине малашнехи ĕçре шута илни кирлĕ. Вăл туртăмсем хăшпĕр чухне уйрăмăн-уйрăмăн „вĕттĕн-вĕттĕн" теорире те, практикăра та халĕ те палăрма пăхаççĕ.

Пирĕн умри задачă—пирĕн путарулăхри, теорири, кри- тикăри, литературă йухăмне куллен йертсе пырас ĕçри çитменлĕхсемпе йăнăшсене конкретлăн, уççăн кăтартса, писатĕлсен массисен активлăхне хăпартса (уйрăмах: „ман ĕç мар, хуй те мĕн хăтланăр, еп пăхса кăна тăрам, мана çеç ан тивĕр", текен писатĕлсене „вăтантарса", вĕсене çавăн урлă литературă йухăмĕн ĕçне хутшăнтарса) пул- тарулăхлă социалисăмлă ăмăртăва вăйлăн сарса йарасси.

Критикă çинчен Критикă пирĕн ку таранччен те-ха малала вигĕмлĕ пусăм тăваймарĕ Вăл калама çук кайа йулса пырат. Çамрăк автăрсемпе веçех те ĕçлемест тесен те ытлашши пулас çук. Кунсăр пуçне йулашки вăхăтсен- че епĕр критикă фронтĕнче ĕлĕкхи вулђгаризатăрлă груп- пăлă чирсем тепĕр хут чĕрĕлме пăхнине те куратпăр. Йа- лавин доклачĕ, Хударăн „Тăвала" çинчен тата „22" çин- чен çырнă статйисем („Трактăр"), Ђамађăн „Малтанхи парне" çинчен („Çамрăк колхозникра"), Уйăп Мишши пултарулăхĕ çинчен („Сунталра") çырнă статйисем тата Паймен̆ăн „Вăкăр çырми" çинчен çырнă статйи çавăн çинчен уççăнах палăртаççĕ.

Худар йулташ „Тăвала" çинчен çырна статйипе „Тăва- ла" автăрĕпе пирĕн литературă йухăмне чăн-чăнах пулă- шас тесе мар, „Тăвала" çитменлĕхĕсемпе йăнăшĕсене мĕн- ле те пулса хупласа хурас, хÿтĕлес тесе çырнă пулас. Хÿтĕлессе тата, çемçен каласан, ытла та аван мар меслетпе хÿтĕлет. Вăл Краснов йулташ хăйĕн романĕнче 1928/29 мĕш çулсенче йалта классем мĕнле хутшăнусене тăнине тĕрĕс кăтартнă тенине викĕслеме Сталин йулташ 1929-мĕш çулта апрел уйăхĕнче сылтăм сулăнчăк çинчен каланă сăмаха тĕрĕс мар çутатса парат, конкретлăрах: кулак çав çулсенче ÿсĕ тенĕ вырăнсене илет, анчах çав ÿсĕм социалисăм ÿсĕмĕпе танлаштарсан айалта пулни çинчен каланă вырăнсене илмесĕр хаварат.

Ку меслет ытлах тĕреклĕ маррине кура пулас, малала вара Худар Йулташ саçартăк çакăн пек „чечексем“ кăларса тăратать. Вĕсем (кулаксем, В. Р.) хăш-пĕр вырăнсенче кăшт ӳсме те пултарнă“.

„Хăш-пĕр кулаксем хăш-пĕр йалта çитĕнме пултарнă, хăш пĕр вырăнсенче çитĕннĕ те“.

„Хăш-пĕр кулаксем ӳснине пытарма çук“.

Çак кулăшла „хăш-пĕр кулаксем“, хăш-пĕр йалта“ тенине вăл темиçе çĕрте турта-турта пырать.

Худар Йулташа чи малтан çакна каламала, кунта вăл ахалех кайала чакать: ху ирĕкӳпе туртма пуçланă лавă йăвăр темели пулман ĕнтĕ 1927/28-мĕш çулсенче кулак хăш пĕр йалта çеç мар ӳснине йе „хăш-пĕр кулаксем çеç мар“ ӳснине Худар Йулташ хăй кăтартнă цитатăсенчен те курать-çке ара!? Иккĕмĕшĕнчен, Худар Йулташă çакна каламала: „Тăвала“ роман-пирки тапратнă сăмахăн тĕп вырăнĕ—кулак 1927—1928-мĕш çулсенче ӳснипе ӳсменни çинчен пымасть,— ку сăмахăн пĕр йенĕ çеç, вăл—социализмпа капитализм çав çулсенче мĕнле хутшăнусемпе ӳсни çинчен пырать. „Тăвала“ романра ку хутшăнусене тĕрĕс мар кăтартнине нийепле те пытарма çук. Виççĕмĕшĕнчен, Худар Йулташ-шăнах уйрăмăн çакна асăрхаттарса хăвармала: литературă искусствипе фотографи искусстви—вĕсем икĕ расна йапала, писатĕл теви нимĕнле „уйрăм кулака“, „уйрăм йăлана“ йе нимĕнле уйрăм илнĕ „пурнăçа“ та кăтартмасть, вăл тĕрĕс-и, тĕрĕс мар-и художествăлă пĕтĕмĕшлĕх парать, типлă обстойательствăсенчи типлă характĕрсене“ кăтартать.

Худар статйи—вуљгарлă статйа. Петоккин „22“ çинчен çырни те çаплах. Кунсăр пуçне весенче группăлă туртăмсем те сисĕнеççĕ.

Њамањпă Паймен статйисенче пулгарулăхри „диалектькăлă материализм метăдне“ чĕртме тăни, пултарулăх процесне ăнланманни, ăна вуљгаризацилени курăнать.

Критикă ĕçне çĕнетесси тарăнлатасси, ăна писатĕлтĕлсене чăн-чăн пулăшакан тăвасси, вуљгаризатăрлă „теорисен“ йулашкисене тăрă шыв çине кăларасси - пирĕн умри тепĕр пысăк задачă.

Малала литературăн массăлă йухăмне йертсе пырассипе çамрăк автăрсемпе ĕçлесси çинчен чарăнса тăма кирлĕ.

Литературăн массăлă йухăмне йертсе пырассине йĕркелес конкретлăлатас тесен, чи малтан пирĕн çакна уçăлатмала: литературăн массăлă йухăмĕн хăш формипе питрех тата çывăхарах ĕçлемеле пирĕн: тĕрлĕрен шкулсенчи литкружоксемпе-и йе урăх литкружоксемпе? Ку ыйту пирĕн ума халђи вăхăтра никçанхинчен çивĕччĕн тухса тачĕ. Пайанхи куна çитиччен Оргкомитет куçĕ умĕнче колхоз çамрăкĕсен шкулĕсенчи литкружоксем çеç тăнă темеле. Мускавра

пултарулӑ литкружоксем ваҫҫи хатӗрленӗ программӑ семпе ҫакӑнта—12—13 ҫулхи ачасем патне йаркаланӑ ӗнтӗ епӗр... Капла туниччӗ кулӑшран пуҫне нимӗн те ҫук пирӗн шутпа. Ҫавӑн пекех хамӑр хатӗрлекен (тӗрӗсрех: хатӗрлемели) программӑсене те колхоз ҫамрӑкӗсен шкулӗсенчи литкружоксене пӑхса тумала мар Колхоз ҫамрӑкӗсен шкулӗсенчи литкружоксемпе ӗҫлес ӗҫре—кӑна тӳрех тата хытӑнах калас пулат: йертсе пыракан вырӑнта Орг. комитет мар, Ҫутӗҫ комиссариачӗ пулмала. Пӗвӑш ӑнлансран ҫакна калама кирлӗ: ку пӗрре те ӗҫе хамӑр ҫинчен теприн ҫине тӳнтерни пулмасӑ, веҫех урӑхла: ку ӗҫе хӑйне тивӗҫ вырӑна лартни пулат, аппашӑва йӗркелени пулат, колхоз ҫамрӑкӗсен шкулӗсенчи литкружоксен ӗҫне вӗсен пӗтӗмӗшлӗ вӗренӗвӗпе ҫыхмалине шута илсе калани пулат, шкулти литературӑ йухӑмне ку таранччен те тивӗҫлӗ хак паман ҫутӗҫ оргӑнӗсене вырӑнтан тапратни пулат Оргкомитет кунта—пулӑшакан организаци.

Оргкомитет чи малтан савӑтри, хапрӑкри, колхозсенчи савӑт пичетӗнче, хапрӑк пичетӗнче, район пичетӗнче ҫыракан, ҫапӑнакан автӑрсемпе ӗҫлемеле. Литературӑ массӑлӑ йухӑмӑн ҫак форми чи тӗп формӑ, чи пире ҫывӑх формӑ пулса тӑрат.

Кашни районӑн, кашни предприйатин хӑйсен писатӗлӗсемпе поечӗсем пур. Вӗсем, пӗтӗмӗшпе илсен, вырӑнти пичетре, район пичетӗнче ҫапӑнаҫҫӗ. Вӗсене епӗр сахал пӗлетпӗр, вӗсене епӗр организацилемен, йӗркелемен, вӗсене ку таранччен йертсе пыраймап,—литературӑлӑ массӑлӑ йухӑмӑн тӗп ҫитменлӗхӗ, Оргкомитет хӑй кампа ӗҫлемелине уйӑрсах илейменнинчен килнӗ тӗп ҫитменлӗх—ҫакӑ ӗнтӗ вӑл.

Пирӗн задачӑ—савӑтри, хапрӑкри, колхозсенчи, районри ҫыракан, ҫапӑнакан автӑрсене литкружоксем туса пӗрлештересси, вӗсене конкретлӑн йертсе пырса вӗсен пултарулӑхне ҫӗклесси, кашни ҫавӑн пек кружок ваҫҫи квалификацилӗ руководитӗл тупса парасси, хатӗрлесси, массӑлӑ литературӑлӑ йухӑма ку таранччен те тивӗҫлӗ хак паман профсойуз организацине вырӑнтан тапратасси. Ҫакна тусан анчах епӗр массӑлӑ литературӑлӑ йухӑмра йертсе пыраслӑх ҫинче хутла ҫатӑлтуран чӑн-чӑн ӗҫе куҫма пултаратпӑр.

Хӑйсен произведенийӗсене республикӑри оргӑнсенче пичетлеме тытӑннӑ ҫамрӑк автӑрсемпе ӗҫлессине те пирӗн ҫитменлӗхсемпе йӗркелесе ҫитермен вырӑнсем нумай. Ку ӗҫра те, ытти ӗҫсенчи пекех, пирӗн литорганизаци хӑйӗн ӗҫне ҫӗнетсе, урӑхлатса ҫитерменни палӑрни ҫинчен епӗр ҫулерех асӑнтӑмӑр. Ҫамрӑк автӑрсен пултарулӑхне ҫийӗнчех тишкерейменни, вӗсен ҫитӗнӗвӗсемпе ҫитменлӗхсене ҫийӗнчех палӑртайманни, вӗренӗвне йӗркелейменни, кон-

сулътацине пур çамрăк автăрсене те çавăрса илейменні консулътаци ĕçне пур квалификациллĕ писатĕлсене те хут шăнтарайманни—кусем ĕнтĕ пысăк çитменлĕхсем пулаççĕ Тата çакна та калама кирлĕ: консулътацин тĕп обйекти пайăхрах палăртайман пирки Оргкомитетăн консулътаці вăйĕ чылай чухне „ăнсăртран“ килекен материалпа расхут ланнă. Консулътацин тĕп обйекчĕ—хăйсене пичетре палăртні автăрсем пулмала. Вĕсенчен нумайĕшĕ, пултарулăхлă пулă шу çителĕксĕртен, час-часах пулсах, пиçсех çитеймеі произведенисем çапаççĕ. Вăл автăрсенчен хăшĕсем хăйсенн хăйсем „пулса та, пиçсе те çитнĕ“, теççĕ ĕнтĕ—кăна та пы тармали çук. Произведенисенчи çитменлĕхсене йышăнман нине, вĕренме тăрăшма „ўркеннипе“ редактăрсем час-часах курма пултараççĕ. Çавăнпа, кунта çав çамăлтайлăха та сирсе йани кирлĕ. Пурнăçа тарăнăн пĕлмесĕр маçтăр пулма май çук. Маçтăрлăх никĕсĕ—пурнăçа тарăнăн пĕлнинче. Вăл пĕлĕве социалисăм строителствинче активлă ĕçлени урлă, ăс тăні пур йенчен те пур майсемпе те уçăлтарса, сарлакалатса пыни урлă анчах çĕнсе илме пулат.

Çамрăк автăрсем нумайĕшĕ ĕлĕкрен йулнă кулътурăтă наçледствăна çавăрса илессипе начар ĕçлеççĕ. Вĕренўн çак йенне пирĕн тимлерех пăхмала. Кунта пĕр-пĕр уйрăм меслетпе çеç ĕçлени çителĕксĕр.

Ĕлĕкхи кулътурăна лайăх пĕлекен квалифициллĕ кадăрсем—искусствоведсем, литературоведсем çукки (йе сахаллиі) кунта пире питĕ кансĕрлет. Анчах çаплах та епĕр ку ĕçе, тăрăшарах парсан, йĕркелеме пултаратпăрах „Çамрăк колхозник“ çумĕнче Оргкомитет вĕренўпе пултарулăх кружокĕ организацилерĕ, вăл кружокра Шупашкарта ĕçлекен пур çамрăк писатĕлсемпе поетсем пĕрлешнĕ,—çакă вăл лайăх пуçару. Паллах, çамрăк автăрсен кружоксем урлă çеç вĕреннипе çураçмала мар. Кунта кашни çамрăк автăр хăйне мĕн çитменнине шута илсе, хăйшĕн хăй пуçарса ĕçлени те пысăк выранта тăрат.

Çамрăк автăрсенчен чылайĕшĕ политикăна начар пĕлнине уйрăмах палăртмала тата. Пушкай, Каттай, Вашки пултарулăхне тишкерсе тухнă чухне ку йапала уççăнах курăнчĕ. Пушкайпа Каттай политикăна начар пĕлеççĕ, хаçат-журнал сахал вулаççĕ, партипе правителствăн постановленийĕсемпе çителĕклĕ таран паллашмаççĕ. Тепĕр çамрăк поет тата „Маркс и Энгельс об искусстве“ текен кĕнеке пирки пĕринче çапла каласа хучĕ: „епĕ вăл кĕнекесене вуласа тухрăм (?), вăл мана нимĕн те памарĕ, воопче и теори теви писатĕле пулăшат тенине шанмастăп, тăрăшни те ахалех пулат“... Марксисăм-ленинисăм философине пĕлес тĕлĕшпе ĕçлес ĕç çине çапла пăхни çамрăк писатĕлсемпе поетсем хушшинче палăратех. Пĕр йенчен вăл

çămăлттайлăх, паллах, пирĕн хаçатсемпе журналсем писатĕл
сене поэтсем умне пахалăх ыйтăвне çирĕппĕнех лартман,
вибчен, лайăх йапаласем хушшинче халтурăлă йапаласем
те çапвичен килсе тăрат.

„Колхоз ĕçлет. Трактăр кĕрлет.
Пайан уй-хир илемлĕ, шавлă.
Ман савни трактăр çинче савнат".

Мĕн пĕлме кирлĕ çак сăмахсене çырма? Нимĕн те пĕлме
кирлĕ мар. Вĕсене çырма, паллах ĕнтĕ, маркçисăм-ленини
сăм философипе парти постановленисене пĕлни—ытлашши
пулат. Ку çеç те мар: савни ларса пыракан трактăра хăш
хуласенчи савăтсевче тунине пĕлни те кирлĕ мар вăл сă
махсене çырма.

Пахалăх ыйтăвне пирĕн ик хут, виçĕ хут çивĕчлетмеле

Акă тата патшалăх издатĕлствин чăваш кĕнеки уйрăмĕ
Ефремăвăн лайăх пйессипе пĕрле Торонейăн ниме йурăх-
сăр „Çитĕнекен хăват" йатлă пйессине çапса кăларнă. Вăл
пйесăра Тороней пионерсем кулак ачисемпе мĕнле пурăн-
нине кăтартат. Автăр ачасем хушшинче палăракан клас кĕ-
решĕве кăтартасшăн пулнă пулас, чăннипе вăл—чышкăпа
кĕрешнине çеç кăтартнă. Торонейĕ хăй... çав чышкăпа кĕ-
решни умĕнче касса кайсах савăнса тăрат. Пйеса педаго-
гикăпа педологи йенчен илсен мĕнле хисепре тăни тĕлĕш-
пе каламали те çук—малтан пуçласа вĕçне çитичченех пйе-
сă пирĕн пионерсене тĕрĕс мар кăтартат, вĕсен шухăш-
кăмăлне тĕрĕс мар йĕрпе йарат. Пйеса сийен кӳме анчах
пултарат.

Пахалăхшăн кĕрешесси—чи тĕп задачă халь хи вăхăтра.
Советла çатăлтатусен çитти айĕнче хăшпĕр чухне клас
тăшманĕ те лайăх хӳтĕленсе тăрат, кăна та йаланах асра
тытни кирлĕ

Епĕр пысăк искусствă тăватпăр. Пролетариат искусст-
вин йаланах ӳссе пыма пур майсем те пур. Пролетариат
искусстви калама çук аслă шухăшсемпе кăмăлсен искус-
стви пулмала. Капиталисăм чăн-чăн искусства хирĕç пырат,
вăл ăна çĕртет, наркăмăшлат. Пролетариатăн йуратнă пи-
сатĕлĕ А. М. Горйкин пултарулăхĕ—рабочи класра мĕн тĕр-
лĕ аслă пултарулăхлă вăйсем пуррине лайăх кăтартат. Ка-
питалисăм йĕрки вăхăтĕнчех пролетариат А. М. Горйкине
ӳстерме пултарнă пулсан, мĕн тĕрлĕ аслă çулсем уçăлнă
апла халь—пролетариат çĕнтернĕ çĕршывра!.. Художĕствăлă
пултарулăхăн чăн-чăн ӳсĕмĕн малтанхи тапхăрĕнче пурнат-
пăр та ĕнтĕ епĕр. Октабĕр револьуци пĕтĕм Совет союзĕнче
сахал мар маçтăрсем ӳстерчĕ.

Пирĕн задачă—хамăр кайа йулса пынине пĕтерессн
пурнăçа, социалисăм строителствине, унăн геройĕсене лайăх

пĕлсе, мĕн пур чĕререн туйса, вĕсене мĕн пур революциллĕ таранлăхпа кăтартма вĕренесси, социализм тапхăрне тивĕçлĕ произведенисем çырасси.

Хамăр ĕçе чăн-чăн çĕнетсе урăхлатассишĕн, самокритикăпа критикăшăн, пултарулăхла ăмăртăва сарса йарассишĕн, пахалăхшăн, „чун инженерĕсем" (Сталин) йатне илтме тивĕçлĕ пуласишĕн, большевисăмăн пысăк искусствишĕн.

**Д. Данилăв**

# МĔТРИ ВАÇЛЕЙĔН ПУЛТАРУЛĂХĔ.

Ĕçлĕр, йурлăр, паттăрлавăр.
(Мĕтри Ваçлейĕ).

...1927/30 çулсенче пирĕн литературăна çамрăксен çĕнĕ ушкăнĕ хутшăнчĕ. Вăл ушкăнран нумайĕшĕ — комсомолра тăракансем. Çаксенчен пĕри—Мĕтри Ваçлейĕ, Мĕтри Ваçлейĕпе пĕр вăхăталах ĕçлеме пуçланă йулташсенчен кунта Уйăп Мишшине, Талвире, Мраҫккана, Агакăва т. ыттисене те аса илме пулат Литературăра вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем маларах, теприсем кайарах палăрса çитрĕç. Çапах та пурте пекех вĕсем хăйсен ĕçне реконструкци тапхăрĕн пĕрремĕш çулĕсенче пуçланипе пĕрлешсе тăраççĕ. Анчах çакна çеç кăтартни нимĕнех те пĕлтермест-ха. Çак çамрăк писателсен хăйне маверлĕ „пĕрлĕхĕ“ — вĕсен пултарулăхĕнче.

Шухăша лайăхрах уçса кăтартас майпа, пирĕн литературăра пĕр 3—4 çул маларах ĕçлеме пуçланă çамрăк писателсен пĕр ушкăнĕ çинчен аса илтерер. Аса илер-ха Хусанкай, Рзай, Митта Ваçлейĕ т. ыт. писателсен питех те пăтранулă асаплă, йывăр, хăш-пĕр тапхăрта пĕтĕмпех клас тăшманĕсем йеннеле сулăнса пынă литературăри çул-йĕрне. Çак, вăл вăхăтри çамрăк писателсене час-часах пĕр, вĕсемшĕн, пысăк ыйту: ă ç т а л а к а м п а? —тенĕ ыйту питех те вăйлă пăлхантарнă, шухăшлаттарнă пулсан, çак писателсен час-часах вăл ыйтăва пĕтĕмпех йăнăш тавăрса каланă самантсем те пулнă пулсан, çулерех асăнна çамрăк писателсемшĕн (Мĕтри В. т. ыт. те) ку ыйту нихăçан та ыйту пулман. Вĕсем пурте пекех хăйсен çулне татăклă пĕлнĕ: пролетариатпа, унăн партипе, комсомолпа. Вĕсен пултарулăхĕн „пĕрлĕхĕн“ тĕп шăнăрĕ çакăнта. Çыраканăн шухăшне тĕрĕс ăнланччăр тесе, çакна калас килет. Паллах, 1921—26 ç.ç-че ĕçлеме пуçланă писателсем хушшинче те хăйсен çулĕсене уççăн курнă йулташсем пулнине такам та пĕлет: Исайĕв, Пинер, Алентей, писателсен çул-йĕрĕсене аса илтерме те кирлĕ мар пек. Çапах тата реконструкци тапхăрĕн пĕрремĕш çулĕсенче ĕçлеме пуçланă пур писателсен пултарулăхĕ те пĕр йевĕрлĕ, тӳп-тӳрĕ çулпа пыманнине литература пурăнăçне астуса пынă йулташсем лайăх пĕлеççĕ. Çапах та 1927/30 ç ç. çырма пуçланă çамрăк писателсен чи йышлă пайĕ унччен 3—4 çул маларах çырма

пуҫланӑ ҫамрӑк писатӗлсен пӗр ушкӑнӗн пысӑк иккӗленӗвӗнчен тасарах пулни ҫинчен, вӗсен йӑнӑшӗсемпе кӗрешсе ӳсни ҫинчен татӑклӑнах каласа хӑвармала. Сӑмах ҫавӑрӑннӑ май ҫакна астуса хӑварар: ҫак факт пирӗн совет литературӗ мӗнле ҫӗнӗрен ҫӗнӗ вӑй пухса идеологи тӗлӗшӗнчен ҫирӗпленсе тӗрекленсе пынине лайӑх кӑтартать.

Мӗтри Ваҫлейӗ, хӑйне пӗр вӑхӑтала ӗҫлеме пуҫланӑ ҫамрӑк литератӑрсем пекех, пӗтӗмӗшпе илсен, идеологи тӗлӗшӗнчен хӑйӗн пӗр йышӑннӑ тӗрӗс ҫул-йӗрӗнчен пӑрӑнмасӑр, иккӗленмесӗр ӳсет ку таранччен. Унӑн ҫӳлӗ 1927 ҫулта ҫырнӑ пӗрремӗш сӑввисенчен пуҫласа 1934 ҫ. ҫырнӑ йулашки сӑввине ҫитех пӗр тӗрлӗ аталанса пыни курӑнать. Ҫапла, вӑл, ку тӗлӗшрен, вырӑсла каласан „цельная творческая личность" пулса тӑрать, тесе калама та пулатчӗ пулӗ. Тематикӑ, материал тӗлӗшӗнчен пӑхсан, унӑн ӳсӗмӗ социалисӑмла тӑван ҫӗршывӑмӑр ӳсӗмӗпе шай пырать теме те пулать. Анчах Мӗтри Ваҫлейӗ маҫтӑрлӑхне, ӑсталӑхне, ӗҫӗн пахалӑхне (кунта унӑн сӑввисем ҫинчен ытларах калатпӑр) тӗпчерех пӑхсан — кӗретех урӑхла калама тивет. Халь астунӑ йенчен Мӗтри В. пултарулӑхӗ ҫӗршывӑмӑр ӳсӗмӗпе шайлаштӑр тесен, автӑрӑн питрех те тӑрӑшса, вӑйлӑн ӗҫлес пулать. Автӑрӑн пултарулӑхӗпе малтан унӑн сӑввисем тӑрӑх паллашар.

* * *

Мӗтри Ваҫлейӗн „Пирӗн сас" йатлӑ пӗчӗкҫӗ кӗнеке пур. Ку кӗнекере автӑр 1928—31 ҫ.ҫ. ҫырнӑ сӑввисенчен авантараххисене суйласа пуҫтарнӑ. Ҫак пӗчӗкҫӗ кӗнекене вуласа тухсан, вулакан чӗринче чи малтан ҫуралакан сисӗмлӗхсенчен чи вӑйлӑраххи вӑл — хавасл ӑх. Пирӗн пурнӑҫӑн хуть хӑш кӗтессине те автӑр хӑйӗн уҫӑ, хаваслӑ куҫӗсемпе пӑхса, хӑйӗн уҫӑ чӗринчен кӗвӗленсе тухакан хавас сиссипе йурлать. Уйавра-и, авӑн ҫинче-и, йӗлтӗр ҫинче-и, вӑрманта йе хирте-и, акана хатӗрленнӗ ҫӗрте-и — ҫамрӑк поет пур ҫӗрте те пӗртен-пӗр пирӗн патшалӑхӑмӑрта ҫеҫ паркаса ӳсекен, чӑн-чӑн хаваслӑх кӗввисене илтет, вӗсене, хӑйӗн вӑйӗ ҫитнӗ таран, сӑвӑлать. Пирӗн ҫамрӑк поетсем, поет пулма тӑрӑшакансем хушшинче хаваслӑн ҫырма тӑрӑшакансем ҫук мар. Анчах вӗсен хаваслӑхӗ час-часах чӗререн, пӗтӗм ӑшчикрен ҫуралса тухни курӑнмасть, кун пек чух ҫыракан пӗр йанрав сӑмахсем кӑна, „ҫап, ҫап, ҫӗмӗр!" тесе кӑшкӑрашсах вулакана ҫӗклентересшӗн. Пӗр вӑхӑтра, 3—4 ҫул кайарах, кун пек сӑвӑсене Йехрим Иванӗ йатлӑскер ҫырма йуртаччӗ. Анчах ун пек сӑвӑсем вулаканӑн кӑмӑлне ҫӗклентерес вырӑнне йӗрӗнтереҫҫӗ, кӑмӑлне кӑна пӑтратаҫҫӗ. Мӗтри Ваҫлейӗн хаваслӑхӗ—чӗререн килнӗ, хӑйӗн ҫул-йӗрне уҫҫӑн, тасан курнинчен, парти йертсе пыракан ҫула


ВУАН ... УКРАІНИ

хăйĕн пурнăçĕпе кĕрешĕвĕн, ĕçĕн, пĕртен-пĕр çулĕ иккенне татăклăн ăнланса илнинчен килекен хаваслăх. Çавăнпа унăн лайăхрах çырнă сăввисем пирĕн вулаканăн чĕри таппипех килĕшӳлĕ йанăраççĕ, вулаканăн чĕрине кĕрешӳ хаваслăхĕпе çĕклентереççĕ.

Пирĕн вăхăтра пĕр пролетариатăн историри миççине ăнланса илнĕ, пролетариат çарĕн салтакĕ пулса кĕрешекен поет кăна хаваслăн, савăнăçлăн йурлама пултарат. Нумайах пулмаст „Литературная газета" шурă емиграцири çамрăк поетсем çинчен çырнăччĕ. Хаçатра асăннă поетсенчен пĕрин сăвви çапла „йанăрат":

> Мир ужасен. Солнце дышит смертью.
> Слава губит, и сирени душат.
> ..Все зде ь—только соловьи разлуки
> И всему погибель впереди.
> (Л. Г. № 30, 1934 ç.

Çапла: вĕсемшĕн хĕвел те вилĕмпе сывлат, сиренсем те сывлăша питĕреççĕ: умра—пурпĕрех пĕтесси. Тĕрĕссипе каласан, çак емиграци поечĕсем, вĕсене буржуазийĕн ытти поечĕсемпе танлаштарсан, хăйсен класĕн малашлăхне тĕрĕсрех, пытармасăртарах, чĕререн кăтартаççĕ. Вĕсен поезийĕ—таврари пурăнăçра, çутçанталăкра, хĕвелте, чечекре вилĕм курса, çав вилĕм кĕввисене естетизацилевипе тулса тăрат пулсан, пирĕн поетсем хăйсен сарлака кăкăрĕсенчен уççăн йанраса тухакан вăйлă сассисемпе:

> „Ĕçлемешкĕн, савăнмашкăн
> Çĕр çиве çуралнă"—

тесе йурлаççĕ. Пирĕн поетсен сăввисенче хĕвел—

> „Чĕрчуна хавăслă
> Сăн-сăпачĕ вĕри йунлă,
> Сывлăш питĕ аслă"

Çак халĕхи пролетари поезийĕн тĕп мотивĕсенчен пĕри „Пирĕн сас" кĕнекере пĕрремĕш страницăран йулашкине çитех вырăн тупнă. Ку—Мĕтри В. пирĕн вăхăтри литературăри идеологи тĕлĕшпе чи хастар йухăмĕ йенвеле ӳссе пынине кăтартат.

* * *

Мĕтри В. хăйĕн пĕрремĕш сăввисене 1927 ç. çырнă. Унăн 1927/28 ç.ç хушшинче çырнă сăввисенче пуринчен ытларах тĕл пулакан темă вăл вĕренӳ ĕçĕпе çыхăнса тăракан темă. Ку темăна автăр тĕрлĕ майпах аса илет,—мĕншĕн тесен вĕренни, пĕлви—пирĕн ӳсĕмĕн пĕр пысăк фактăрĕ. Ку вăхăтрах автăр пролетари револуцийĕн уйав кунĕсенче килнĕ хăйĕн шухăшĕсене савăлат, Хĕрлĕ çара асăнса, хамăр çĕршывăн сыхлăх тĕрекĕ ӳснине савса, кивĕ йала çĕнĕ, социалисăм çулĕ çине чĕнсе çырат. Кунта автăрăн пĕр аван йенне кăтартса памала: автăр кашни кăтартнă темăнах

пирĕн пурăнăçри куллен кунхи йавленисемпе çыхса кăтартма тăрăшат. Çăмахран, „Анноне“ йатлă сăввинчи автăр ĕçхĕрарăмĕн революцичченхи чура пурăнăçне кăтартса, хальхи çĕнĕ саманара ĕçхĕрарăмĕ „йĕме чăрăнни“ çинчен çырат. Анчах автăр хăй çырас тенĕ сăна çырса çитерейместь, пĕтĕмĕшпе кăтартаймаст, вăл ун çинчен хăй ытларах калат. Каласа пани ав ăрăн ытти сăввисенче те кăтартассине витсе тăрат. Ку автăр ăсталăха çавăрса илейменнине кăтартат ĕнтĕ.

Йыш тĕлĕшĕнчен автăрăн 1929 ç. çырнă сăвăсем ытти çулсенче çырнинчен нумайрах. Анчах 1929 ç. ăраснalăхĕ ытти йенчен те палăртса тăрат. Ку çулта автăр хăйĕн хальччевхи темисене тарăнлатарах пынисĕр пуçне, автăрăн ăсталăхĕ те сисĕнчĕклех ӳсме тытăннисĕр пуçне, автăр йурийех пĕчĕк ачасемшĕн тăрăшса ĕçлеме пуçланине асту тарас килет; йурийех ачасем валли çырас ĕçне автăр çак çулăн 2-мĕш пайĕнче пуçланă. Ку ĕçе автăр малашне те, хăйĕн вăйĕ, ăсталăхĕ çитнĕ таран, тăрăшса туса пырат. Çапла автăр хăйĕн литературăри вырăнне, хăйĕн вулакансене тупат.

Малашнехи çулсенче Мĕтри В. сăвăсем çырас ĕçĕ чакнăçемĕн чакса пырат: 1930/31 çулсенче автăр малтанхи çулсенчен сахалтарах çырнă пулсан, 1932—1933 çулсенче автăр сăвăсем хутран-ситрен кăна çыркаласа пыни курăнат. Автăрăн çак йулашки çулсенче çырнă сăввисем маларах çырнисенчен вимлех те уйрăм тăмаççĕ: вĕсем ни тематикă, ни ăсталăх йенчен, ни пĕтĕм ĕçĕн аталанăвне сарас, тарăнлатас тĕлĕшрен автăр çĕнĕ çĕнтерӳсем тувине кăтартмаççĕ. Кунта автăр час-часах çĕнĕ материалпа усă курса хăйĕн сăввисене ĕлĕкхи темисем тăрăхах çырат. Тен ку автăр йулашки çулсенче прозă çине куçса пынинчен килеттĕр? Хут мĕнле пулсан та Мĕтри В. йулашки çулсенче сăвăсем çырмаппа пĕрех, тени—тĕрĕс.

* * *

Ăсталăх йенчен.. Паллах, никам та тӳрех ăста халлĕн çуралмаст. Ăсталăха ĕçпе çĕнсе кăна илме пулат. Мĕтри В. çак иртнĕ 6—7 çул хушшинче çырнă сăввисене илсессĕн, вăл сăвăсем çырма пуçлаканшăн начар сăвăсем теме çук. Вăл сăвăсем Мĕтри В. пирĕн совет литературинче хăйне йевĕрлĕ уйрăм вырăна каларса тăракан сăвăсем мар. Автăр хăш-пĕр чух (малтанхи çулсенче) халăх поезинчи сăвă принципĕсемпе (сăвăри виçев, строфасене тăвас тĕлĕшрен), чăваш литературинче çирĕпленсе пынă формăсемпе усă курса ĕçлет. Анчах ни халăх поезийĕн пуйанлăхне, ни совет литературин чи паха çитĕнĕвĕсене çавăрса илнине курма çук: автăр хăйĕн ĕçĕнче пуринчен ытларах асăннă материалти примитивсене, шаблонсемпе усă курат. Каллех

калатпăр, çырма пуçланă чух ку тапхăртан иртсе кайма çук ĕнтĕ. Анчах ăсталăха пĕрмаййах ӳстерсе, хăвăн ĕçĕнте çенĕрен çĕнĕ çитĕнӳсем туса пырас тесен, примитивсенчен хăвăртрах хăтăлса, хамăр чăваш совет поэзийĕнчи чи çӳлĕ çитĕнĕвĕсене çавăрса илсе, пĕтĕм совет поэзийĕн, ĕлĕкхи литературăн чи паха тĕслĕхĕсенчен вĕренсе ĕçлемеле. Çапла ĕçлесе вĕренсен (йе вĕренсе ĕçлесен, тейĕпĕр) кăна хăвăн пултарулăхна ӳстерме, хăвна ху тупма пулать. Вара тин çакă йе тепĕр поэт хăйĕн ытти поэтсенчен уйрăм, индивидуаллă вырăнне тупма пултарать... Кунта ытти халăхсен литературинчи чи лайăх тĕслĕхсенчен вĕренес ыйту пирки çӳрекен айванрах пуклак сăмах-йумах пирки калама-мар иртсе кайас килмест.

Хусанкай йулашки çулсенче Майаковскирен вĕренсе пынине вулакансем чиперех пĕлеççĕ. Тĕрĕссипе калас пулсан, Майаковскирен вĕренес текенсем пирĕн литературăра сахалах мар. Мĕнрен килет-ха çак Майаковски йеннеле туртăнни? Революци вăхăтĕнчи Майаковски — пысăк аудитори поечĕ, унăн поэзине пысăк, сарлака массăсенчен уйăрса илме çук Паллах, ку Майаковскин йулашки вăхăтри сăввисем массăна ăнланма çăмăллинчен те килнĕ темеле Çаксене аса илсен те (кунта Майаковскине пур йенчен палăртас шухăш çук пирĕн) пирĕн поэтсем Майаковски йенне туртăннин сăлтавĕсенчен хăш-пĕрисем уççăнах курăнаççĕ. Астумасăр иртес мар: Хусанкай шăпах хăйĕн пĕччен лĕх лирикинчен хăтăлма пуçланă вăхăтра, ĕçхалăх масси хушшинче хăйĕн вырăнне тупма тăрăшнă вăхăтра Майаковскирен вĕренме пуçларĕ. Хусанкай аталанăвĕ çак Майаковскирен вĕренсе пынă тапхăрта хăйĕн çӳлĕ вырăнне çитрĕ тейесшĕн мар епĕ. Çук, Хусанкай ĕçĕнче çак тапхăр халлĕхе иртсе кайман пулсан та, паллах, вăл — вăхăчĕпе иртсе кайас тапхăр. Хусанкай ку тапхăртан тата çӳлерех иделлăх, ăсталăх тапхăрĕсене куçса пыма тăрăшмасан, унăн пултарулăхĕ пӳлĕвсе ларма та пултарĕ. Мĕнле кайĕ поетăн малашнехи ӳсĕмĕ — халь ун çинчен калаçмăпăр. Анчах çак поет Майаковскирен вĕренсе ĕçленĕ тапхăр унăн пултарулăхĕнче питех те пархатарлă, хăйĕн пахалăхĕпе уйрăмăнах палăрса тăракан тапхăр. Çав пысăк поэтран талантлă вĕренсе пынине пула та ĕнтĕ Хусанкай хăйĕн ку таранччен çырнă йапалисенчен чи аванраххисене çырма пултарна Анчах, Хусанкайăн чăн йăнăшĕсемпе чăнтан-чăн пысăк çитĕнĕвĕсене курма пĕлмен (йе йурийех „курман“, йе пĕр-пĕр йулташăн çитĕнĕвне кĕвĕçмесĕр пăхма пултарайман?) хăш-пĕр литератăрсем „Магниттуна“ „сăмах купи“, йе „вут-хĕлхемсĕр“ (произведени йе) „Майаковскирен çырса илнĕ“ произведени теме пикеннине те астутарас килет. Кун пек шухăшсем ку тарачччен пичетех çитейменччĕ.

Нумайах пулмаст („Трактăрăн“ 7-мĕш №-че) вăл шухăшсем пичетре те палăрчĕç. Кунта Еллийĕв статйи çинче тĕплĕ чарăнса тăмасăрах, статйа автăрĕ „Пушкин стихĕпе“ кăна çырма чĕнни, Майаковски стихĕпе çырни „чăвашсемшĕн“ социалисăмлă реалисăм стилĕ мар тенисене астутарас килет. Еллийĕв пирĕн çĕнĕ истори условисенче, темĕн чухлĕ тăрăшсан та, Пушкин стихĕ çуралса тухма пултарайманнине пирĕн поетсен Пушкинран, ытти клаççиксенчен, совет поезийĕнчен, вăл шутра Майаковскирен те вĕренсе пымалине ăнланмаст. Еллийĕв хăй статйинче поетсемпе пысăк ăсталăхшăн тăрăшса, ĕçхалăхне ăнланма çăмăл сăвăсем çырма чĕннĕ вăхăтрах поетсен вĕренӳ ĕçне ансăр ăнлантарса парат. Еллийĕв теорипе социалисăмăн формă тĕлĕшĕнчен питĕ пуйан поезине ӳстерес ĕçе ăнланманнине кăтартат. Çавăнпа вăл теорийе нийепле те килĕшме май çук.

Пирĕн çамрăк поетсен, вĕсемпе пĕрле Мĕтри Ваçлейĕн те, кашни пысăк поетăн сăвă принципĕсене лайăх тĕплесе вĕренсе, вăй çитнĕ таран, хамăр чăваш чĕлхине çепĕç принципсем (принципы организации стиха—тейĕпĕр) шутласа кăларас тĕлĕшпе те ĕçлемеле. Шутласа кăларни (изобретатĕлствă) поезире те йатламали йапала мар, çук; ку ĕç тĕрĕс çулпа, ĕçхалăх массине кирлĕ çулпа пырат пулсан—вăл ĕçе пулăшас пулат.

Нумайах пулмаст пĕр поет, сăмах çавăрăннă май çапла каларĕ: „Епир наци форми пирки пуш барабана ытларах çапатпăр. Анчах вăл ăнланури шухăшсене, вăл ăнланури елементсене, деталĕсене тавçăрса илейместпĕр. Наци форми.., поезире, театăрта, живопиçре, музыкăра вăл ăнлану хăй манерлĕ ӳтленмеле“... Ку сăмахсенче тĕрĕсси пурах.

Паллах, наци форми искусствăра мĕнле пулмали çинчен шухăшлана чух нихăçан та вăл ытăва искусствă содержанийĕнчен, унăн „определитĕлĕнчен“ татса илме йурамаст. Çак тĕп принципе астуса пырса пирĕн поезийĕн наци формиве пуйанлатнăçемĕн пуйанлатас тĕлĕшпе вăйлăн ĕçлемеле-хэ. Пирĕн поетсем ку тĕлĕшрен хăйсен ĕçне тĕплĕ пĕлсе ĕçлемеççĕ-ха, ку ĕçре стихийă хуçа пулса тăрат тесен те ытлашши пулмĕ. Сăмахран, чăваш поезийĕ вăйлăнах тоникă çиçтеми çине куçса пырат. Анчах, çак çиçтемăн пирĕн поезири ăрасналăхне, „хăйлăхне“ (своеобразие) тĕплес тĕлĕшпе кам ĕçлевĕ? Никам та. Тоникă çиçтемиц пирĕн поезире, вырăс поезипе танлаштарсан, хăйне манерлĕрех ӳтленни паллах.

Кун пек ыйтусем темĕн чухлех. Вĕсене пирĕн поетсен тĕпчесе пĕлме, ăнланса илме тăрăшас пулат. Пĕлни, ăнланса илни кăна стихийăран хăтарма пултарат. Пĕр пĕлни, нумай пĕлни кăна поезире çĕнĕ формăсене, çĕнĕ принцип-

сене, пирён совет поэзийён наци формисене пуйанлатакан принципсене шутласа каларма пулашё.

* * *

Поэта, Хусанкай калашле, „Республика сăмах саватне шанса пана". Вёрен, пёл, пётёмёшпех: чёлхен мён пур пуйанлăхне, унăн законёсене, историне, пайанхи кун-çулне пёл; унăн илемлёхёпе, вăйёпе уса курма пёл; унăн хăйне манерлё „йунсăрне" пёл; ан пăс ăна ăна пăсакансенчен, варлакансенчен сыхла, ÿстер, вăйлăлат, пуйанлат ăна Çакна ыйтат республика поэтран.

Епир хамăр чёлхене начар пёлетпёр. Поэтсем те пире вăл чёлхепе илемлё калаçма вёрентеймеççё-ха. Ытларах та: пирён литература чёлхи час-часах чёре, ёçхалăх калаçакан чёлхерен те имшертерех пек туйăнат. Апла пулсан— пирён литература чёлхи хамăр чёрё чёлхен мён пур пуйанлăхне, илемлёхне пуçтарса çитереймен пулат?..

...Нумайах пулмаст Шупашкарта партийён 17-мёш конференцийёнче Куславкка комбинатёнчен килнё хёрарăм делегатка тухса каланине илтме тиврё. Унăн сăмахё, вăл сăмаха калакан политика, культура тёлёшёпе тепёр чылай вёреннё çынран кайра тăманнине кăтартнисёр пуçне, чёлхе тасипе, илемлипе çавăнтарчё. Литературăра ёçлекенсем аса килчёç. Çук, пирён нумайăшё çав делегатка пек таса, илемлё калаçма, çырма пёлмеççё-ха. Пурăнăçра рабочисем, колхозниксем хушшинче асăннă делегатка пек калаçакансем темён чухлех. Пирён совет литературинчи произведенисем, тÿрех калас пулат, чылайăшё çав вулакансен кăмăлёсене кайас çук.

Мётри В пирён литература чёлхине тёплё пёлмест-ха. Унăн ку тёлёшрен виçё тёрлё йăнăшсем курăнаççё пек. Пёрремёш—чăваш чёлхи синтаксисне лайăх пёлменни. Чăнах та писатёлён хăйне манерлё синтаксисё пулма пултарат ёнтё Анчах вăл синтаксис чёлхен тёп законёсене пиртё лайăх пёлсе ёçленё чух кăна ăнăçла шăтса ÿсме пултарат. Мётри В йăнăшёсем çав чёлхен тёп законёсене тёплё пёлейменрен килнён туйăнаççё. Ака вăл „Ырашăн" 29 стр. çапла çырат: „Граждăн вăрçинче çёнтернё пекех туйăнчё ăва пёвене уçса йани". Кун вырăнне: „Пёве уçса йани граждăн вăрçинче çёнтернё пекех туйăнчё ăна" тенё пулсан тёрёсрех те, лайăхрах та. „Ырашра" кун пек çитменлёхсем нумайах мар, тăрăшарах çырнă пулас. „Ирёклёхре" кун пек çитменлёхсем—ытларах.

„Пёчёк усрав вăрманё çуммён иртсе тухсассăн **шăркаланса ларакан „Ирёклёх" коммунăн** ыраш пуссине". Автăр: „Шăркаланса ларакан ыраш пуссине" тесшен пулнă, анчах урăхла тухнă. Ие (9 стр.): „100 ытла

улмуççи лартнă—„100 улмуççи ытла"„ „Кашнине уйрăм тарелкăпа автарса парса тăраççĕ кухнăран виçĕ хĕрарăм" — „Виçĕ хĕрарăм кухнăран кашнине"... кирлĕ. „Пуççене усса лараççĕ каçсерен пуханса"—„Каçсерен урамсене пуханса пуççене"... Кун пеккисем „Ирĕклĕхре" чылайах.

Чăн та, час-часах писатĕл чăваш çинтаксисĕн тĕп йĕркине „çĕмĕрни" хăш чухне вырăнлă пулма та пултарать: писатĕл пĕр пĕр шухăша витĕмлĕрех калас тесе хăй çырса кăтартакан обйекта пур майпа та (тепĕр чухне пуплев йĕркине „çĕмĕрсе" те) сăнлас тесе çинтаксисăн тĕп йĕркисене йурийех „ватма" та пултарать ĕнтĕ. Вулакан кун пек йури тунине, ăна чăнах та пĕлсе, ăста тунă пулсан часах тавçарса илме пултарать Анчах чăваш сăмахĕ, унăн тĕп законĕсем пирĕн писатĕлсен ĕçĕнче час-часах чипертерех ĕçлеме вĕренменрен çĕмĕрлеççĕ.

Унтан, Мĕтри В, чылай çамрăк поетсем пекех, хăйĕн сăввинчи сăмахĕсене рифмăшăн, „тăрăшса" пăснисем тĕл пулкалаççĕ Рифмă—лайăх пултăр, анчах сăмаха мĕншĕн çĕмĕрес?... Майаковски пĕрре, Хусана пырсан, пĕр рифмăна хăй йепле шырани çинчен каласа кăтартнăччĕ. Вăл каласа панинчен пире, вулакансене, çав пысăк поет мĕнле нумай ĕçлени курăнчĕ. Пирĕн, çамрăк поетсем, ытах рифмă тухмасан, сăмаха чуглама, тĕрĕсрех—сăмаха амантма, асаплантарма тытăнаççĕ.

Тĕслĕхсем: Пирĕн ўтпĕвĕм (ĕр?) пит те çирĕп.

Çирĕпленнĕ çĕн вăйра („Пирĕн сас" 15 стр.).

„Вăйпа" кирлĕ, анчах айаларах „хулран" сăмах тăрать, çавăнпа „вăйпа" вырăнне—„вăйра", „ўтпĕвĕмĕр" кирлĕ. Анчах апла тĕрĕс çырсан,—вара ытлашши сасă тухать.

Çав рифмăшăнах, пулас, çўçентерекен метафăрăсем тĕл пулаççĕ: хир, йалсем, хуласем —

„Пурте хĕрлĕ"
Пĕсехелĕ".

Хĕрлине хĕрлĕ-ха вĕсем, анчах мĕншĕн „пĕсехелĕ?"—ăнланма йăвăр.

Йе тата:

Еин енччĕ кăва
Мул тĕнчи,
Ененменччĕ кăва
Ни Румыни („Хурçă креппă:").

Мĕншĕн „Румыни" ăраснах?

Ытти çитменлĕхсенчен, Мĕтри В хăш-пĕр сăмахсене литературăра йышăннă пек çырманни çине кăтартар:

...Ĕсĕрĕлсе пайан йăлгах еп
Хир тырриййĕн шăршипех...

Епир литературăра „Ўсĕрĕлсе" сăмаха йышăннă; унтан иртнĕ вăхăтра: „Ўсĕрĕлтĕм" тесе çыратпăр. Çавăн пек йăнăшах:

„Анчах, еп хапсăнмас тăван киле"...
..„Кисип те вантăр"—„Кисĕп" çырмалл

Йе·

Вăл та пусан çителексĕр:
Витес те пут.
Хутас та пут.

Тĕрĕс: „пулсан" „çителĕксĕр", „пулать".

Паллах, çак халь кăтартнă çитменлĕхсем, литературă чĕлхине пĕлерех çитсен, вĕсем сахалпансах, пĕтсех пырĕç. „Ырашра" вĕсем—сахал. Анчах авгăрăн халлĕхе вĕсенчен сыхланса ĕçлемеле-ха.

* * *

Ăсталăх... поези автăр хăй çинчен йе пĕр-пĕр йапала çинчен каласа панине йуратмасть. Поетăн кăтартса, сăнласа парас пулать. Мĕтри Çаслейĕ сăввисенче кăтарту пĕрех те çук тени тĕрĕс пулмĕччĕ. Çук, автăр хăй калас тенĕ шухăша, йавленийе сăнлама тăрăшать. Çапах та унăн сăввисенче асра тăрса йулакан сăнсем çук-ха...

Кунта пирĕн поезире пысăк ăста пулса тăракан Çеçпĕл М сăввисене вĕсен хăватне, вĕсенчи асран каймн вăйлă, хăш-пĕр чух çав-тери хăрушă, сăнсене вулакансем астăваççĕ. Анчах хальхи çамрăк поетсен произведенийĕсенче те йулашки вăхăтра чипер сăнсемех палăркалаççĕ. Нумайах мар, çапах та пур.

Нумай пулмасть Уйăп Мишшин „Çамрăк вăй" йатлă сăвăсен кĕнекине вуласа тухма тиврĕ. Вăл кĕнекери сăвăсенчен нумайăшĕ вуласа тухнă хыççăнах—çукпа пĕрех: ни ăстăна, ни чĕрене, тенĕ пек. Анчах çав кĕнекере икĕ сăвă пур: „Сулă çинчи йурă", „Колхоз хĕрĕн йуратăвĕ". Çук, ку сăвăсене манаймастăн. Мĕншĕн тесен „Колхоз хĕрĕн йуратăвĕ" сăвăра—çын сăнĕ, хальхи колхоз хĕрĕн сăнĕ. Вăл сăна, чăнах та, çамрăк поет çырнă, ку сисĕнет. Çапах та вăл сăн—чылай вăйлă, чĕрене çĕклентерекен сăн. Автăр хăйĕнчен пĕр сăмах та каламасть кунта. Çак тĕслĕхсем пирĕн çамрăк поетсем те, лайăх тăрăшса ĕçлесен, ăсталăха çавăрса илессе хытах шантараççĕ.

Пирĕн вулакан сарлака, тарăн, ĕмĕр тăрăшшĕ асран кайми сăнсене çырса параса кĕтет. Поетсем хаçатри статйасене сăвăлама пăрахса, çав сăнсене кăтартас тĕлĕшпе пигĕ тăрăшса ĕçлемеле. Пурнăçа çывăхрах пĕлес пулать. Пурнăçра тем темтери çĕнĕ фактсем, событисем, çĕнĕ çынсем. Хаçат, вĕсем çинчен хăй пек каласа парать. Поетсен вĕсене хăйсем пек кăтартса парас пулать.

Мĕтри В. чĕрĕ пурнăçри фактсене илсе çырнă сăвăсем сахалрах-ха. „Пирĕн сас‑ра ун пек сăвăсенчен „Вилми чĕрелĕ Ленин“, „Акана хатĕрленни“, „Вăрманта“, „Чĕпĕсем“ йатлă сăвăсене тата ытти хăш-пĕр сăввисене кăтартма пулат. Епĕ вăл сăвасем кĕнекери чи аван сăвăсем тесшĕн мар. Автăр конкретлă материал илсе ĕçлеме пикеннине çеç астутарасшăн. Ытти сăввисен йачĕсем: „Çĕнĕ пурнăç“, „Пирĕн çул“, „Çĕнĕ суха“, „Хурçă ут“ тата ыт те. Кам çырман ĕнтĕ кун пек йатлă сăвăсене? Çырнă, вуланă. Çук, капла йурамĕ, пурнăçа сывăхрах пулмала.

* * *

Сăвăсем çырса пынă вăхăтрах Мĕтри В икĕ очĕрк çырчĕ: пĕрне („Ыраш“)—1930 ç., тепĕрне („Ирĕклĕх“)—1932 ç. „Ыраш“ очĕркăн материалĕ, унăн содержанийĕ çинчен каламăпăр. Очĕрка вулакансем лайăх астăвăççĕ-тĕр. Çак очĕрк автăр ĕçĕвче ăсталăх тĕлĕшĕнчен мĕнле ырăн йышăнса тăни çинчен каласа хăварас килет.

Очĕркра калани кăна кирлĕ, кăтартни кирлĕ мар, тесен ытлах та йăнăш пулĕччĕ. Анчах пирĕн писатĕлсем, ытларах хăйсем калама йуратарах паракансем, очĕрк çырнă чух хăйсем çыракан йапаласем çинчен каласа кăна иртерме йуратаççĕ. Тĕслĕхшĕн Алагĕрĕн „Стройкăра“ йатлă очĕрксен кĕнекинчи очĕркне астугарар „Ыраш“ чи малтан автăр кунта колхоз пурнăçне кăтартма тăрăшнипе палăрса тăрат (колхоз пурнăçне çеç мар, унăн паттăрĕсене колхоз пурнăçĕнчи çивчĕрех самантсене). Автăр „Ыраш“ пурнăçне çийелтен, унăн пайанхи кунне çеç пĕлмест: вăл унăн историне те пĕлет, унăн кĕрешӳ çулне пĕлет. Çавăнпа вăл унăн пайанхи кунне лайăх кăтартма, унăн паттăрне—Морозăва та кăтартма пултарнă. Морозăва Мĕтри В. пур йенчен сăнласа çитереймен. Çапах та автăр ăна чылай ăста çырнă. Вăл сăн Мĕтри В., тăрăшса ĕçлесен, чиперех çырма пултарнине кăтартат.

Очĕркри хăш пĕр картинасене витĕмлĕ тунă. Чи аванраххи—пĕве çинчи трагедилĕ картинă. Ку картинăра пĕтĕм Морозăв, колхоз пуçлăхĕ Морозăв пĕтĕм хăйĕн сăн-сăпачĕпе тухса тăрат.

Очĕрка композици тĕлĕшĕнчен те килĕшӳлĕ, вулакана интереслентермеле тунă. Автăр вулакана хаҫхи вăхăтран иртнĕ вăхăта, унтан каллех хаҫхине... куçарса колхоз историне паллаштарат. Вырнаçулă тунă. Очĕрк композицийĕ автăр очĕрка чĕрипе, ăш-чикĕпе „пăлханса“ çырнине кăтартат. Çавăнпа очĕрк вулакана та пăлхантарат, çĕклентерет.

Чĕлхе... Каллех калас пулат: тăрăшса ĕçлесен пултарат мĕн автăрĕ. Тăрăшса ĕçлесен—мĕншĕн тесен „Ирĕклĕхре“—(ку очĕрка автăр „Ыраш“ хыççăн çырнă) автăрăн чĕлхин каллех уксахлама пуçлани куранат.

„Ирĕклĕрех“ ҫинчен уйрăм чарăнса тăмалли́ех те ҫук. Вăл очĕрк автăр „Ырашран“ ҫÿлерех хăпарнинә кăтартмасӑ. „Ирĕклĕхри“ материал ĕҫленсе ҫитеймен, ăна автăр „Ырашри“ пек пусараймаан, тĕрлĕ вĕт-шаксенчен тасатайман: вулаканна интереслентерме пултараймаан фактсем, деталҍсем тĕп материала йывăрлатса, пусарса тăраҫҫĕ. Чĕлхи те, кун ҫинчен каларăмăр ĕнтĕ, чылай уксахлаӑ. Ҫапла автăр лайăхрах ҫырма пултарнă тăркаҫах хăйĕн ăсталăхне чакарнă. Килĕшӱсĕр, йурăхсăр йапала.

Ку очĕрк ҫинчен каласнă май Сталин йулташ партин XVII-мĕш сйезĕнче халҍхи йалхуҫалăх коммунĕсем пирки каланине астумасăр иртсе кайас килмест

Мĕтри В. очĕркра „Ирĕклĕх“ коммунин пурнăҫне кăтартаӑ Автăр унăн йывăрлăхĕсене, ҫитĕнĕвĕсене кăтартаӑ. Анчах, пăхăр-ха: йепле примитивлă вăл коммунăн пĕтĕм пурнăҫĕ Тĕрĕссипе каласан вăл хăйĕн йачĕпе, тата ... уравниловкă тĕлĕшĕпе ҫеҫ коммунă йатне илнĕ Анчах уравниловкăна пурăнăҫ ҫĕмĕрет иккен. Кăна автăр пытармасӑ. Ку автăрăн обйективлăхне, унăн реалисăмне кăтартаӑ ĕнтĕ. Мĕн пур паллăрах йенĕсенчен „Ирĕклĕх“ йĕри-таврари колхозсенчен уйрăм тăмасӑ. Тавлашу-харкашу кăна ытларах. Ҫапла „Ирĕклĕх“ очĕркра-автăр хăй ҫырса кăтартакан коммунăна кăмăллаҫа кăтартма пикеннĕ пулҫан та, ҫапах та автăрăн очĕркĕ тăрăх, коммунăсем туни халҍхи истори тапхăрĕнчен сиксе каҫма хăтланнине лайăхах курма пулаӑ. Ҫавăнпа ҫак очĕрка халҍ тепĕр хут вуласа тухсан пĕртен-пĕр вывăд ҫеҫ тухса тăраӑ. Вăл вывăд—Сталин йулташ вĕрентнинче: „Ҫук, коммунă кирлĕ, вăл, паллах, колхоз йухăмĕн аслă форми пулса тăраӑ анчах аслă формă ырăнĕнче халҍхи коммунă мар, аталанса ҫитеймен техникă ҫинче, ҫимĕҫсем ҫитменни ҫинче тытăнса тăракан, халҍ хăйех ертел пурнăҫне куҫакан коммунă мар, пулас коммунă—вăйланса ҫитнĕ техникă тата ҫимĕҫсем тухăҫлă туса тăнă никĕс ҫинче шăтса тухакан коммунă пулаӑ“.

* * *

Ҫакăн пек курăнса тăраҫҫĕ Мĕтри В 6—7 сух хушшинчи литературăри ĕҫĕн паллăрах йенĕсем Унăн халҍччен ҫырнă произведенийĕсем Мĕтри В. чи ҫамрăк сыпăкрын аслăрах—иккĕмĕш сыпăка куҫса пынă ҫул-йĕрне кăтартнă пек туйăнаҫҫĕ. Умра—тата ҫӱлĕрех сыпăксем. Ырми-канми ĕҫлесен, ырми-канми вĕренсен кăна малала ӱсме пулĕ.

Мĕтри Ваҫлейĕн пĕр ыр йенĕ пур. Вăл: хăйĕн (ҫӱлерех кăтартвă йулташĕсем пекех) ытлашши кăшкăрашмасăрах, мăнкăмăлланмасăр ĕҫлет. „Епĕ, епĕ“ тенине Мĕтри В. пĕрех те йуратмасӑ пулас. Ку пит аван ĕнтĕ.

„Епĕлĕх“ чирĕ пирĕн литературăра çук темеле мар. Пур. Хăш-пĕр ытларах та çамрăк поэтсемех (анчах, ытла та шел,—ку чир çитĕнерех панисем хушшинче те пур-ха!) хăйсене хăйсем пĕтĕм чăваш совет литературин генийĕсем, тесе шутлама пикенеççĕ вара. Пур-ха ун пеккисем Шупашкарта та, Самарта та.. Çав йулташсем кăшкăрашнă чух хут те хăçан та Карл Маркс хăйĕн „Морализирующая критка и критизирующая мораль“ йатлă статйинче „грубийансен“ литератури çинчен çырни аса килет. К Маркс вăл статйара грубийансен‘ литературине çапла характеристикă парат:

„Плоская, хвастливая, наглая, претензиозно-грубая в нападении и исторически-чувствительная к чужой грубости.; смехотворно-сплетающая пафос с вульгарностью; афиширующая свой интерес лишь к об'ективной стороне дела и все время ее игнорирующая..; мещанское содержание облекающая в плебейскую форму; борющаяся с литературным языком, чтобы придать ему если так можно выразиться—чисто телесный характер; охотно показывающая за строками писаний фигуру самого автора, руки которого так и чешутся показать мощь своей длани, ширэту своих плеч и втянуться во весь свой богатырский рост ., зараженная мелочной грызней.. безсильная выставить противника в смешном виде и потому оглушающая его всей гаммой смехотворной ругани; Соломон и Маркольф, Дон-Кихот и Санчо-Пансо, мечтатель провинциал в одном лице; хамская форма возмущения, обличие возмущенного хама; все это погруженное в атмосферу **частного** самосознания самодовольного ничтожества,—такова была **литература** грубиянов XVI столетия“. (Маркс и Энгельс Об искусстве“ Сов. лит. 1933 г., 117 стр.).

Çак характеристикă пирĕн хăш пĕр, ытлашши ĕçлемесĕрех питех те хытă кăшкăрма йуратакан, ĕлĕк йăнăшсем тунă писатĕлсене литературăран кăларса ывăтма пикенекен литератăрсене ытлах та тĕл тивет. Куншăн вим хавасланмали те çук. Çук. Ĕçлеме йуратманни, „епĕлĕх“ çаксем—чирсем вĕсем. Чире пĕтерме тăрăшас пулат. Чăваш совет литературине вăл чирсенчен тасатас пулат.

Мĕтри В, халлĕхе çамрăк писатĕлсенчен пери пулса тăраканскер, çав чирсенчен таса тăни, пире, вулакансене хаваслантарат. Пуçа çӳле çĕклемесĕр, чăн-чăн ĕççынни пек тăрăшни хавасланатарат... Малашне те çак йăлана пăрахмасăр тата вăйлăрах ĕçлени, хăвăртрах малала утни кирлĕ.

**Виктăр Рзай**

# ÇАМРĂК ПОЕТСЕМ.

## Леон. Пушкай, Ал. Каттай, Ив. Вашки.

**(Çак автăрсен пултарулăхне пăхса тухас майпа тунă докладран).**

Асăннă поетсем çак çулсенче шăтса тухса çитĕнсе пыма пуçларĕç. Вĕсен пултарулăхне пăхса тухса, вĕсен çитĕнĕвĕсемпе çитменлĕхĕсене палăртни питĕ усăлă пулĕччĕ. Пирĕн литературă йухăмĕшĕн те, поетсемшĕн хăйсемшĕн те. Анчах литературă çамрăк çарĕн пултарулăхĕсене çийĕнчех палăрта-палăрта пырассипе, çапла çамрăк писатĕлсемпе поетсен ÿсĕмне малала çĕклесе пырассипе епĕр начар ĕçлетпĕр. Совет чăваш писатĕлĕсен Оргкомитечĕ те, комсомол хаçачĕ те, критикă та ку ĕç çине ку таранччен те-ха кирлĕ тимлĕхпе пăхма вĕренсе çитеймен.

Виç поетăн пĕр пекле йенĕсем. Тематикă тĕлĕшĕнчен, чун-хавал тĕлĕшĕнчен вĕсем виççĕш те пĕр пек; çырнă сăвăсенчен вĕсен нумайĕшĕ комсомолĕссем çинчен, пионерсем çинчен калаççĕ. Комсомол ĕретĕнче тăраканскерсем вĕсем виççĕш те уçă кăкăрпа сывлаççĕ. Совет сойузĕнчи ĕçхалăх, вăл хушăра чăваш ĕçхалăхĕ те, мĕн тĕрлĕ пысăк, хăватлă ĕçсем туни, вăл ĕçсенче комсомол мĕн тĕрлĕ пысăк вырăн йышăнни, колхоз, колхоз бригади, ирĕклĕ ĕçĕн савăнăçĕ, пионерсем, пионерсен маршĕ, вĕренÿ, вĕренÿпе ĕç, лагĕр, çĕнĕ уй-хир, социализăм ĕçĕнчи хастарлăх, ентузиасăм,—акă мĕнсем çинчен калаççĕ вĕсен сăввисем. Хавасла чун хавал кашни сăвă витĕр тухат, нимĕнле нăйкăшу, нимĕнле иккĕленчĕк. Вăл ыйту вĕсене аса та килмест.

„Чĕрем ман хурçă,
Кăшкăр çитĕо,
Ут-тир чÿхенвĕ тарпала.
Пĕрлешÿре калатăп:
— Сирĕл умран пĕчченлĕх,
Тăпралан!
Еп пĕччен мар.
Ман йыш—КИМ çарĕ.
Ман йыш—ударникла хăват.
Вăл мул тĕнчин
Сăртне куçарчĕ,
Пайан
Çĕн никĕсе хыват"
(Пушкай, „Кĕрешÿ сасси").

Çак автăрсен тепĕр тĕп перпеклĕхĕ, вăл—риторикă. Тÿррипе каласан, ку характерлă паллăлăх пĕр çак поетсене

анчах тивмест вăл, тата çамрăк поэтсене çеç те тивмест. Сăмахран, Хусанкайăн т. ыт. „ватăрах“ поэтсен йулашки сăвви-йапалисенче те вăл риторикă уççăнах палăрат. Паллах, риторикă та икĕ тĕрлĕ, икĕ пахалăхлă. Пĕр поэтăн илемлĕ сăмахĕ пĕр-пĕр обрăзпа никĕсленмеçт, тарăнланмасăт пулсан, çапах та унăн риторики риторикăпах пурнăçа тарăнăн, тымартан илнипе никĕсленсе сăлтавланат. Ун пек сăвва вуланă чухне вулакан поэта ăнланат, унăн илемлĕ çĕкленулĕ сăмахĕсем чăнах те сăлтавланнине курса тăрат, çапла вара унпа пĕрле хăй те çĕкленсе кайма пултарат. Анчах тепĕрле риторикă пĕтĕмпех урăхла: вулакан поэта ăнланмасăт, унăн илемлĕ сăмахĕсем ăçтан тухнине курмасăт, мĕншĕн тесен поэтăн илемлĕ сăмахсем с ă в ă р а сăлтавланман унăн х а в а с л ă ç ĕ к л е н ĕ в ĕ с ă в а р а н х ă й ĕ н ч е н тухмасăт. сăвăра х ă й ĕ н ч е с ă л т а в л а н м а н, н и к ĕ с л е н м е н, çапла вара хăш пĕр чухне вулакан аптраса кăна тăрат: „мĕн пулчĕ-ха поэта—тет вăл,—мĕн пирки çапла „илемлĕ“ „хастарлă“ самахсемпе çатăртаттарса кайрĕ-ха вăл?“... Вулакан пĕлет, пит лайăх пĕлет болшевиксен ĕçсем темĕн тĕрлĕ хавасла, çĕкленулĕ, хастарлă шухăшсăмаха тивĕçлине, ĕмĕрне çырăнман, ку таранччен çырăнма та пултарăнман одăсене тивĕçлине. Анчах вулаканпа çакă пулат: вăл хаваслă, хастарлă, илемлĕ сăмахсене итлет, вулат, анчах болшевиксен тĕлĕнмеле историлĕ ĕçĕсене (пурнăçра вăл вĕсене пит лайăх курат, çав ĕçсенче вăл хăй те хастарлă ĕçлет пулсан та) сăвăра вăл курмасăт, мĕншĕн тесен поэт вĕсене вимĕнле те кăтартман, кăтартнă пулсан та ахал пекки кăна пек „илемлĕ“ сăмахсемпе асăнса иртсе кайнă, вăл ĕçсене туллин, конкретлăн обрăзласа кăтартман. Р и т о р и к ă вăл—ку йенчен пăхсан—о б р ă з с ă р л ă х. Р и т о р и к ă в ă л—ку йенчен пăхсан, к о н к р е т л ă х ç у к[...]. с ă м а х-й у м а х „в о о п ч е“ н ы н и“

Ак çаксем ĕнтĕ асăннă поэтсемшĕн виççĕшĕн те характерлă паллăсем пулса тăраççĕ. Паллах, капла калани вĕсен пур сăввисем те обрăзсăрлă, пĕринче те вĕсенче конкретлăх çук тени пулмасăт. Капла каланине Каттайăн йулашки вăхăтра „Канаш“-ра çапăнса тухнă „Ишекĕ“, Пушкайăн „Сунтал“-ăн 9—10-мĕш №-че çапăннă „Октабĕр йалавĕ“ чылай хирĕçлет Кусем çинчен епĕр кайарахпа уйрăмăнах асăнăпăр. Анчах çаплах та çак асăннă поэтсем мĕн çырнисене пĕтĕмĕшпе илсе пăхсан, нумай сăввисем вĕсен риторикăлă. Вĕсенче чи кирли—образ - çук. Çак вăл вĕсемшĕн ку йахăнлăха тĕп çитменлĕх пулса тăрат. Кăна халех каласа хăварас пулат.

Акă кашнинне пĕрер сыпăк, пĕрер характерлă сăвă илсе пăхар:

Пушкайăн „Ей, ут, бригадă", йатлă сăвви.

„Анне! Пăх-ха, йепле
Илемлĕ!
Йепле утăççĕ çамрăксем..
Йалав вĕçет,
Йалав хĕлхемлĕ...
Ĕçе ĕçлетпĕр
Хаљ бригадăч,
Тĕнче тăватпăр хурçăран.
Ей, ут, бригадă! кассăн кассăн
Хĕлхем йалкăштăр пурнăçран.

„Анне, пăх-ха!".., Анчах ман шутпа „амăшĕ" куçлă-пуçлă пулсан та нимĕн те курмасť ку сăвă витĕр, мĕншĕн тесен поет конкретлăн нимĕн çинте кăтартмасť, конкретлăн нимĕн те каламасť. Поет бригадăна чĕррĕн, чĕрĕ çынсем урлă, пĕр пĕр ударник сăнне чĕррĕн сăрласа кăтартнă пулсан, вулакансем чăнах та çамрăксем мĕнле хастарлăхпа утнине, пурнăçран çĕнўлĕ хĕлхем йалкăшнине, çĕнĕ пурнăç вучаххи шавланине, трактăр çĕнĕ пурнăçăн йапали пулса тăнине, тен, лайăххăнах, уççăнах курнă пулĕччĕç.

Вашки сăвви.

Йалан бољьшевисăм
Сўнми вутлă тăвăл.
Хаљ ун хăватне те
Виççе илес çук.
Мĕн пур Сойуза
Тимлĕнех
Вутласа, вăл
Ударлă мăн ўсĕмлĕх
Кўлчĕ кăчух.

Малала та çавăн пек. Кунта епĕр хаљ бољшевисăма тăвăлпа танлаштарма нийепле те май çукки çинче чарăнса тăмăпăр. Çакна çеç калас килет: поетăн каллех конкретлă чĕрĕлĕх, образ çук. Вĕсем вырăнне—лозунгсем.

Каттайăн:

„Хаљхи уй хурсăпа
Пин чĕрелĕ,
Пинпеле хăшлатаť ун чĕри.
Амăртаť, васкатаť
Ĕç аллийĕ,
Ăçта ха хĕрў ĕç ку тери?
Пирĕн вăй çиçĕм пек,
Çĕнтерўлĕ,
Пирĕн вăй кисретет тĕнчене.
Ĕç алли,
Кăвар пек вăл хĕрўлĕ.
Вутпала йалкăшса çитĕнет".

Çакăн пек лозунгла сăвăсем, ĕççем çинчен, пурнăç çинчен, çитĕнўсем, çĕнтерўсем, çитменлĕхсем çинчен „воопче" калакан сăвăсем пайан смотăрта тăракан поетсен виççĕшĕн те ытла та нумай вара. Тўррипе каласан, ун пек сăвăсен варринче вĕсене уйăрса илме те çук, поетсен литературăлă сăн-пичĕсем пĕтĕмпех пĕрпеклене кайаççĕ.

Риторикăлă сăвăсем çинчен калană чухне, вĕсене хўтĕлес шутпа Майаковскине илеççĕ хăш-пĕрисем. Ку тĕрĕс мар. Майаковскин риторикăлă сăвăсем чылай пулсан та, вĕсем уншăн тĕп паллă, тĕп тымар, тĕп характерлĕх пулса тăмаççĕ, вĕсем ун пултарулăхĕн пĕр йенĕ (вăл та ытлах тĕшĕлĕ йен мар) анчах пулса тăраççĕ,—ку пĕр йенчен. Тепĕр йенчен—унăн риторикăлă сăвăсем пысăк пĕлўпе, пысăк кулђтурăлăхпа никĕсленнĕрен нумайĕш çийелтен анчах (ритмă, хăй майлă синтаксис, сăвăсене хăй майлă трибунла йĕркелени) риторикăлă туйăнаççĕ, тĕпрен пĕлсен вĕсене пурнăçăн пуйан ăшчикĕ çĕклентерсе тăвине кашни вулаканах туйса тăрать. Майаковски поезире, чĕлхере, поези формисенче хăй майлă револђуционер пулнă. Вăл ку тĕлĕшпе нумай çитĕвўсем тунă. Вăл çитĕнўсем ĕнтĕ совет поезине тĕреклĕн ырнаçса пыраççĕ, вĕсемпе, паллах, пирĕн чăваш совет поечĕсем те усă кураççĕ. Анчах усă курни чылайĕшĕн йăнăш çулпа пырать. Вăл йăнăш çул Майаковскийе çийелтен çеç ăнланнипе сыхăнса тăрать. Кун пирки, Майаковскийе мĕнле ăнланма кирли çинчен, унăн мĕнне илмĕле, мĕнне илмеле марри çинчен, вăл литературă теори, политикă тĕлĕшпе мĕнле позицисем çинче тăни çинчен, вăл позицисем чылай чухне ун пултарулăхĕн пахалăхĕ çине те, хăйсен пичетне çапни çинчен т. ыт. çинчен те пирĕн критикăн çамрăк писатĕлĕсене, поетсене тĕплĕн ăнлантарса памала.

Çакăнтах епĕ тата пирĕн çамрăк поетсене пытĕ характерлă икĕ йапала çинчен асăнса хăварасшăн. Пĕри илемлĕх сăмах хатĕрĕсене тивет, тепри—пирĕн çамрăк поетсем социалисăмла техникă ўснине мĕнле кăтартни çинчен.

Пирĕн çамрăк поетсенчен чылайĕш револђуцийе, болђшевисăма тăвăлпа, çилпе танлаштараççĕ, обрăзлаççĕ.

„Йалан болђшевисăм
Сўнми вутлă тăвăл" (Вашки).
„Еç хĕмленеı
Çил тăвăл майлă" (Пушкай).
„Пулĕ вăрçă! пулĕ тăвăл!
„Еç алли—мула ишет". (Каттай).

Револђуцийе, револђуци ĕçĕсене çил-тăвăлпа, тăвăлпа танлаштарни, обрăзлани вулакансем йенчен илсе пăхсан çеç те, чистийех йалăхтарнă ĕнтĕ. Тепĕр йенчен, пролетари револђуцине çапла танлаштарни тĕрĕс мар пулать, вăл çапла танлаштаракан поетсем пролетари револђуцине ăвланайманнине, вĕсем ăна 17—18 ĕмĕрсенче пулнă хресчен в „стихийлă" хусканăвĕсемпе, восстанийĕсемпе пĕрле ырпаштарса ăнланма тăнине пĕлтерет. Вырăс „хресчен" поечĕсем—Клђуйĕв, Клычков, Йеççенин, çимволиссенчен—Блок („Двенадцать") чăнах та çапла йышăнма „тăрăшнă" (камăлĕсем çапах йышăнма туртнă) пролетари револђуцине. Вĕсем, нумай пулсан та, буржуалă демократилĕ

революцин платформи ҫинче тӑнӑскерсем, йе ӑна та „йышӑнманскерсем“, капиталисӑма хирӗҫ социалисӑм йенчен мар, авалхи, капиталисӑмченхи патриархалӑ пурнӑҫ йенчен тӑнӑскерсем, паллах, Раҫҫейри пролетари революцин малтанхи ҫулӗсенче ӑна ҫав хресченсен „стихийлӑ“ восстанийӗсемпе (пугачовшчинӑпа, разинщинӑпа) хутӑштарса йышӑнма тӑрӑшнӑ. Вӗсен илемлетекен сӑмахӗсем ҫав шухӑшпа тӯленнӗ, ҫав шухӑшпа ҫыхӑннӑ. Ҫавӑнпа вӗсемшӗн пролетари революци те тӑвӑл, Исус Христос („Впереди Исус Христос“—Блок)..

Вырӑс поечӗсем ҫеҫ мар, пирӗн чӑваш поечӗсем те хӑшпӗрисем (сӑмахран: Хусанкай, Рзай, Ваҫанка) 1925—26-мӗш ҫулсенче пролетари революцине ҫапларах ӑнланса кӑтартнӑ. Ку традициле тӑсӑлса пыракан хӯререн ҫамрӑк поетсен часрах ҫӑлӑнмя, хӑпма тытӑнас пулать.

Малала Ак техникӑ ӯсӗмӗ ҫинчен калакан ҫамрӑк поетсене пурне те тенӗ пек характерлӑ сӑвӑ.

„Ак ирхи хӗрелнӗ шуҫӑм
Сӑнне сапрӗ Атӑла.
Атӑла тӗллерӗ куҫӑм!
Курчӗ хурҫӑ шыв ҫуна.
Сывлӑша касать пропеллӗр,
Йанӑратӗ ҫӗн мотор.
Умӗнче ларать ун шофӗр,
Кантӑк куҫлӑхлӑ маттур.
Хуларан хула патне вӑл
Атӑл тӑрӑх виҫрӗ ҫул.
Вӑл шӑвать ак, ҫил те тӑвӑл!
Куҫупа ес пӑх та йул,
„Моторсен ӗмрийӗ килчӗ.
Хурҫӑланчӗ те сӗрпыв“—
Пуҫӑмра ман шухӑш вӗҫрӗ,
Ҫырана лапкарӗ шыв.
Вашки Шывҫуна“.

Ҫапса кӑларма пултарӗҫ-ши ҫак сӑвва чикӗ леш йенчи пӗр-пӗр буржуалӑ йӗрке пурнакан, хаљхи вӑхӑтри техникӑ тӗлӗшӗнчен ҫапах та ӯсекен патшалӑхра? Пултарӗҫ. Техникӑ ӯсӗмӗ ҫине автӑр отвлеченно пӑхнӑ: пӗр ҫӗрте техникӑ експлоатаци хатӗрӗ пулнине, тепӗр ҫӗрте вӑл чӑн-чӑн ӯсӗме кӑтартнине автӑр манса хӑварнӑ. Ҫавӑнпа сӑвӑ хут кирек-кам аллинчи техникӑна та гимн йурланӑ пек ҫеҫ тухнӑ. Техникӑ ӯсӗмӗ ҫине ҫапла сывлӑшран пӑхни пӗр ку автӑршӑн ҫеҫ мар характерлӑ, чылай автӑрсемшӗн характерлӑ.

Малала ҫак илнӗ поетсем ҫинчен, кашнин ҫинчен уйрӑммӑн калама тивет.

Пушкай. Сӑвӑсенчи „пӗчӗк“ детаљсем ҫинчен.

„Ман шухӑшӑм ракет пек вичкӗн.
Ҫӯле, ҫӯле хӑпарса
Ирхи шевле пек
Вутлӑн ҫиҫӗн!“

Шевле тесе кунта шурăмпуçа каланă пулас. Шурăмпуç çиçсе мар, йерипен сарăлса пырат. Йе автăр чăн-чăн шевленех илсе каланă. Апла пулсан ирхи сăмах ытлашши. Шевле (çиçĕм) ирхине, кăнтăрла начар курăнат, хăватсăр курăнат.

„Ман йыш"—ударникле хăват
Вăл мул тĕнчин сăртне куçарчĕ.
Пайан çĕн никĕсне хыват.

Йапалана куçарсан тепĕр çĕре лартаççĕ. Автăр куçарĕ тесе мар, çĕмĕрчĕ, ватса тăкрĕ, тесе каласшăн пулнă. Анчах малти рифмă—çарĕ, çĕмĕрчĕпе никак рифмăланаймаст.

„Çĕклевчĕ ĕçхалăх,
Çуле йар тăратрĕ
Йунпа пĕвсе илнĕ йалав".
(„Октабĕр йалавĕ").
„Пур рабочи халь кĕвĕ:
Тиф, йунлă—фронта.
(„Октабĕр йалавĕ").

Тифлă йе тиф ăшне путнă кирлĕ. Тире кирле мар.

„Малтанхи парне" сборникре Пушкайăн çак сăвăсем образлă туртăмпа пулнă темеле. „Пионерла салам" „Йалта" „Мучийе". Автăрăн çак сăвăсен образлă тенденцине аслăлатма, тарăнлатма тăрăшмала.

„Йем йешĕл симĕс халатне
Вăрман хывасшăн йăпăр-йапăр.
Пайан ак шкулăн алăкне
Йар уçрĕ те ирхи çентабĕр.
Ĕнер кăна
— Хиртен шкула!
Пур çамрăк сасă пачĕ.
Атăр!
Йешĕл хавaслăх
Йăл кулат,
Питсем к·лаççĕ
Хатĕр'
(„Пионерла салам").

Вĕрену çулĕ пуçланнипе, ачасем ăна мĕнле хавaслăхпа кĕтсе илнинех чĕррĕн кăтартнă.

„Йалта" сăвăра автăр чылай ĕвентерулĕ лирикăпа йал социалисăмла никĕс çинче çулсерен ӳссе пынине кăтартат. (Çитменлĕхсем çук мар ку сăвăра та). Автăрăн художĕствăлă сисĕм пур. Вăл хăш-пĕр чухне пĕчĕк пĕчĕк детальсем урлă çеç те пысăк йапалана кăтартса парат. Акă „Йалта" сăвăра автăр амĕш вулама вĕреннĕшĕн савăнат, унăн кăмăлĕ килсе тулат, вăл кун хыççăн амăшне татах хытăрах йуратса кайни çинчен каласшăн, вăл ăна ун çинчен амăшне мар... „савăннипеле... шăллăма пырса ыталарăм" тесе пĕлтерет...

Пĕр-ик сăмах Пушкайăн „Сунталăн" 9—10-мĕш №-че çапăннă „Октабĕр йалавĕ" йатлă епизочĕсем çинчен. Тӳрех

калас пулат, епизодсене схематисăм чернилĕ сапăннă йулсан та, çапах та ку епизодсем Пушкай малала ӳссе пынине кăтартаççĕ. Малтан автăр пусмăр айийĕнче пулнă ĕççыннисен хурлăхлă ертеллĕ йуррине парат. Вăл йуррăн кĕвви те, сăмахĕсем те, пĕтĕмĕшпе илсен хурлăхлă, анчах вăл хурлăхлă йуръ витĕр те автăр ĕççыннисен тӳсĕмлĕхĕ хушăран-хушăран татăла-татăла пынине, хурлăхлă сăмахсем хушшинче çиленӳлĕ тавăрулă сăмахсем кертсе кăтартма пултарнă. Йурă кĕске, унта Феврэль. Октабĕр умĕн пулнă историлĕ ĕçсене (сăмахран империалисăмла вăрçа) асăнман та темеле. Анчах çаплах та ĕççыннисен шухăшкăмăлĕсем вĕсем умĕн мĕнле çивĕчленсе пынине автăр палăртнă. Малала автăр револьуци тапхăрне граждăн вăрçи тапхăрне кăтартма тăрăшнă.

Фольклорпа сипетлĕ усă курнă вырăнсем пур:

Аслати авăтат, çиçĕм çиçет...
Буденай лаши кĕçенет.
Çитес те çĕре ай çитмесен,
Пире Ленин йулташ çиленет.
„Тугăр вĕçĕ куççульне шăлат,
Савни савнитен уйăрлат
—Ах, сывă пул, Фельă, каçар,
Ирте́ртĕмĕр йулашки каçа".
„Ан йĕрсем, ан тăк ес куççульна,
Куççульпе йусаймăн кунçулна.

Хăш-пĕр вырăнсенче Безыменски „Комсомоли" пусăмлани сисĕнет.

## Каттайăн „Ишĕкĕ" çинчен.

Каттайăн „Ишекчен" çырнă сăвăсем нумайĕш çăмăл сăвăсем, çийелтен шăйăрттарнă сăвăсем, вĕсенче вăл хăйĕнчен нимĕн те каламасть, вĕсенче унăн хăйĕн тĕсĕ, хăйĕн сăнпичĕ çук, ытти çамрăк поетсем хушшинчен ăна нийепле те уйăрса палласа илме пулман. Пушкайшăн „Октабĕр йалавĕ" малали утăм пулнă пекех, Каттайшăн малали утăм „Ишек" пулат.

Мĕн лайăх „Ишекре?" „Ишек" сăвăра автăр конкретлă материал çинче пирĕн пурнăçăн пысăк çĕнтерĕвĕсене кăтартасшăн пулнă. Пĕтĕмĕшпе илсен, вăл ăна чылай лайăх сăвăласа кăтартнă. Вулакан чĕрĕ çынсене курат, чĕрĕ çынсене итлет. Вăл пурнăç кĕрешĕвĕн хуранĕнче вĕресе тухнă çынсем çинчен, Марийе çинчен, Уртем çинчен каласа парат. Анчах калас пулат, автăрăн сăввисенчи туртăмĕ тĕрĕс пулсан та, унăн пĕлĕвĕсем сахалли, çавăн пирки тарăнлăх çукки сисĕнет. Сăмахран, Марийепе Уртем хальхи вăхăтра лайăх пурăнни çинчен çырнинче вăл вĕсене апатçимĕç йенчен, пӳрт-çурт йенчен анчах лайăх пурăннă пек

кăтартать. Çĕнĕ ĕç, социализм строительстви пĕтĕм пурнăç мĕн пур тымартан улăштарса, çĕнĕлетсе пыни, çынсен хушшинчи отношенисем, çăмахран, çемье отношенийĕ, кÿршĕпе кÿршĕ отношенийĕ, ĕç çине мĕнле пăхасси, ашшĕ-амăшĕсемпе ачисен отношенийĕ т. ыт.—çак отношенисем тĕпрен улшăнса пыни, вĕсем хаљ уйрăм харпăрлăх тăллисенчен çăлăнса чăн-чăн савăнăçлă, ирĕклĕ пулса пыни, йал çынни тени те пĕрлешÿлĕ харпăрлăх моралљне йышăнса пыни —„Ишек"-ре курăнмаççĕ, тес пулать.

Пушкайăн та, Каттайăн та уççăн их хăш пĕр сăвви сенче йут поэзирен кĕнĕ пĕр туртăм сисĕнет. Вĕсем вырăн-вырăнпа ĕç çукран уçăлма тухнă улпутсем майлăрах çырса кайаççĕ. Ак тĕслĕхшĕн.

> .Еп кашни ир
> Тухатăп,
> Тинкереп:
> Республике куратăп
> Пур йеьчен"
>
> (Пушкай).

Каттай „Ишек"-ĕн малтанхи пĕр сăввине (пуçламĕш сăввине) пĕтĕмпех тенĕ пек çаплах çырнă. Шупашкартан Ишеке кайма тухнă автăр... Ним сăлтавсăр, ним тĕртевсĕр... автăр лавçа мăнкăмăллăн тенĕ пек ыйту парать.

> — Мучи, каласамччĕ,
> Мана ес пăртакçă.
> Мĕнле иртсе кайрĕ
> Сан иртнĕ кунçул?.. тата ыт. те.

Çамрăк поэтсем умĕнче хăйсен сăввисене ытлашши сăмахсенчен, сăмах çÿппи сенчен тасатас задачă çивĕччĕн тăрать. Ку автăрсем пирки калас пулсан, вĕсем уйрăмах „пайан", тенĕ сăмаха ăçта килчĕ унта чикеççĕ. „Пайан ман саввăç", „пайан хастарлăх", „пайан йалав вĕлкĕшет"—пур çĕрте те пайан, пур йапала та пайан пулать.

Йулашкинчен пĕр·ик сăмах çамрăк поэтсем, писатĕлсем умĕнче тăракан пĕтĕмĕшлĕ задачăсем çинчен.

Пирĕн маçтăрлăх пĕчĕккĕ. Епĕр хамăр произведенисене час-часах çийелтен шăйăрттарса, темĕн чухлĕ шыйрăк туса çыратпăр. Чĕрĕ пурнăçа вилĕ туса кăтартатпăр. Чĕрĕ пурнăç вырăнне пирĕн хутсем çине вилĕ схемăсем ÿкеççĕ. Обшчĕствă аталанăвĕн темиçе тĕрлĕ çыхланса пĕтнĕ процесне епĕр сыхланусăр пыракан процес пек туса кăтартатпăр. Хăш-пĕр чухне вăл процесăн тĕшшине курмасăр йулатпăр, ăна тĕрĕс мар çутататпăр, пĕр йавлени вырăнне тепĕр йавлени кăтартатпăр, ăнсăртран пулакан йавленисене йалан пулса пыракан йавленисенчен уйăрса илме пĕлместпĕр. Тĕрлĕрен емпирисăмсем, схематисăмсем, психологисăмсем, бытовисăмсем, çаксем пулаççĕ ĕнтĕ вĕсем.

Мĕн вăл маçтăрлăх? Хăшĕсем пирĕн хушăра формă йенчен йака, çыпăçулă сăвă йе урăх йапала вулаççĕ те, калаççĕ вара: Вот кăна маçтăр çырнă. Ку поет—маçтăр, теççĕ. Тĕрĕссине каласан, ку пĕрре те тĕрĕс мар, ку ыйтăва çийелтен ăнланнине анчах пĕлтерет. Формă йенчен йака, çыпăçулă сăвă çырма пĕрре те маçтăр пулма кирлĕ мар. Ăна формальнăй поетикăна лайăх чăмланă поет çеç те тума пултарать. Маçтăрлăхăн никĕсĕ „поетикăра" мар, вăл—пурнăçа сарлакан та тарăнăн пĕлнинче Маçтăр вăл пурнăçăн пĕр мĕнле те пулса йенне çеç мар, вăл пурнăçăн хуть кирек-мĕнле йенне те хăйĕнчен тĕртсе йамасть. Акă пирĕн хăш-пĕр çамрăк поетсем хаçатсенче пĕр-ик-ултă сăвă пичетлеççĕ те, йе пĕрер кĕнеке кăлараççĕ те, хăйсене хăйсем таçта кайса хума пăхаççĕ. Сăвăран пуçне вĕсен шухăш-кăмăлне кирли тĕнчере урăх нимĕн те çук пек хăтланаççĕ. Вĕренме пăрахаççĕ, физикăпа хими, математикă çине Нйу-Йорк небоскребĕсем çине ҫулăхса сураççĕ, хăйсен йулташĕсенчен „мăнкăмăллăн" пăрăнма пăхаççĕ. Çакăн пек поетсем, хăйсем йăнăш çулпа кайнине хăй вăхăтĕнче туйса илмесен, тӳрех калас пулать, нихçан та маçтăр пулас çук, нихçан та пурнăçа тарăнăн кăтартас çук, хăйсен произведенийĕсемпе социалисăм тăвакансене усăллă пулас çук, социалисăм строителстви тапхăрне тивĕçлĕ поет-писатĕлсем пулас çук. Совет писатĕлĕсен маçтăрлăхĕн никĕсĕ—обчăллă практикăра, социалисăм строителствинче активлăн, хастарлăн ĕçленинче, çав активлă практикă урлă пурнăçа сарлакан та тарăнăн ăнланнинче, пурнăç опытне пухнинче. Акă епĕр çĕнĕ тематикă çинчен калаçатпăр: пирĕн поетсемпе писатĕлсем çĕнĕ тематикăна халĕ те-ха çителĕклĕ таран тарăнăн çавăрса илеймен, тетпĕр, Кăна пĕтĕрессиì çинчен, шухăшласа пырсан та епĕр, пĕр йенчен, çав çӳлерех калани патнех, обчăллă практикăра активлăн ĕçлеме кирли патнех пыратпăр.

Тепĕр факт. Пирĕн çамрăк поетсемпе писатĕлсем ĕлĕкхи кулътурăна критикле çавăрса илессипе начар ĕçлеççĕ, йе хăшсем нимĕн те ĕçлемеççĕ. Вăл çеç мар: епĕ хам пĕрре пĕр виç-тăват кĕнеке çапса кăларнă писатĕлех хăй классиксене вуламаннишĕн мухтаннине илтсеччĕ. Ĕлĕкхи кулътурă çине çапла пăхнине пирĕн нимĕн хĕрхенмесĕр сӳрсе йамала. Оргкомитетăн, критикăн кун çине уйрăмах тимлĕн пăхмала. Хальхи вăхăтри вырăс литературине вĕренме кирли çинчен те çаплах калас пулать. Пирĕн хушăра хăшĕсем вырăс классикĕсенчен те, вырăссен хальхи совет литературинчен те пире нумай вĕренме кирлине „наци форми", наци форми çук, наци форми çухалать тесе „наци форми" тĕнине националисăмла ăнланса, тĕртсе йама пăхаççĕ. Кăна та пирĕн вăйлăн сирсе йамала. Пирĕн поетсемпе

писатĕлсен ăспуçĕ шухăшĕçем цĕлĕвĕçем тӳрех калас пулат, халĕ те-ха нацин хĕсĕк картинчев тухса çитеймен. Пирĕн произведенисем нумайĕш шывак пулни, çийелтен çырăнни, вĕсем час-часах çателĕклĕ ĕневтерӳсĕр пулнин сăлтавĕçенчен. пĕри, ман шутпа, çакăнта ĕнгĕ.

Епĕр социалисăмла строительствăра активлă ĕçлесси-шĕн, хамăр пĕлӳсене çак ĕç çинче тата мĕн пур майсемпе йаланах, пĕр чарăнмасăр ӳстерсе пырассишĕн, хамăр шу-хăш-кăмăлсене наци хĕсĕк картинчен кăларса çитерсе, наци задачисене интернационалисăмла ăнлантарассишĕн кĕре-шетпĕр. Çапла кĕрешсе пырсан анчах епĕр социалисăм тапхăрне тивĕçлĕ произведенисем çырма пултаратпăр.

# Чăваш çамрăк совет писателсен канашлăвĕ йышăннă

# РЕЗОЛЮЦИ[1].

**(Чăваш Совет писателĕсен Оргкомитечĕ çирĕплетнĕ).**

Чăваш çамрăк совет писателĕсен канашлăвĕ пĕтĕм Союзри Оргкомитетăн 3-мĕш пленумĕн ĕçĕсем çинчен тата çамрăк писателсен творчествипе пирĕн умра тăракан задачăсем çинчен тунă докладсене илтнĕ хыççăн çаксене палл тăвать:

1. Пĕтĕм Союзри Оргкомитет пленумĕ, совет писателсен Союзри сйезĕ умĕн пулса иртнĕ йулашки пленум пулнăскер, Совет Союзĕнчи совет писателĕсем умне художествăлă литературă пахалăхĕшĕн кĕрешессипе ăна содержани йенчен те, формă тĕлĕшĕнчен те социалисăм тапхăрне тивĕçлĕ литературă тăвасшăн кĕрешессине пĕтĕм аслăшпех кăларса тăратрĕ.

2. Чăваш совет литератури Парти Обкомĕ тата унăн ответлă секретарĕ Ç. П. Петров йулташ куллен-кун çывăххăн йертсе пынипе, йулашки çулсенче чылай пысăк çитĕнӳсем турĕ—литературă продукцийĕн идейлăхĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, нумай çӳле хăпарчĕ, писателсемпе поетсем сарлака фондлă произведенисем пара пуçларĕç, художествăлă произведенисем тăрăх вĕсем хăйсен творчествине социалисăм строительствинчи куллен хи задачăсемпе çыхăнтарма тăрăшни курăнать, çав вăхăтрах писателсен организацийĕ хăй те хăйĕн ĕречĕсене çĕнĕрен çĕнĕ çамрăк писателсем кӳрсе пырса ӳсет, тĕреклент.

3. Çитĕнӳсемпе пĕрлех канашлу чăваш литератури организацинче, çавăн пекех литературă продукцинче те, пит пысăк çитменлĕхсемпе чăрмавсем пурри́не палăртса хăварать. Ку çитменлĕхсенчен чи пысăккисем вырăнне хурса, канашлу çаксене астутарать, вĕсене хăвăртрах пĕтерме хушать:

а) Литературă организацийĕ Парти Тĕпкомĕн апрелĕн 23-мĕшĕнче йышăннă постановленине пĕтĕм тарăнăшĕпех пурнăçа кĕртесшĕн çителĕклĕ вăйлăн кĕрешмен.

б) Художествăлă литературă социалисăм строительствинчи хăвăртлăхран кайра йулса пыни пирĕн Чăваш литературине ытларах та тивет;

в) Чăваш литературине наци картинчен кăларас тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемен, уйрăмăнах кунта интернационаллă темă тата сыхлăх теми сахал вырăн йышăнса тăрать.

г) Литературăра унăн спецификишĕн—художествăлăхшăн çителĕклĕ кĕрешменни йулашки вăхăтра хăйне сисмелĕх палăрта пуçларĕ: прозăра вăл—публицистикă, поезире—риторикă нумай вырăн йышăнса тăнипе палăрать; çапла вара художествăлă творчествăра писателсем, чăн-чăн художествăлă сăнлăхсем пама тăрăшас вырăнне, схематисăмăн çăмăл çулĕпе кайни час-часах палăрать.

д) Художествăлă литературă жанрĕсене аслăлатса пырасси çителĕксĕр, уйрăмăнах кунта драматургире комедисем, прозăра та поезире те кулăшла, мăшкăласа питлекен литературă çителĕксĕр тăнине палăртмала.

е) Художествăлă литературă чĕлхине вăйлатас, ăна емоцилĕ вăйлă содержани парас тĕлĕшрен писателсемпе поетсем сахал ĕçлеççĕ, нумай произведенисенче чăваш чĕлхин граматикă формисене пăснисем, вырăсла сăмахсене йе вырăсла сăмах çавăрнăçĕсене ним тишкĕрӳсĕр чăваш чĕлхине кӳртсе лартнисем, калаçу чĕлхине пăхăнса литературă чĕлхи çине çăмăлттайла пăхнисем тĕл пулаççĕ.

---

[1] Канашлу 1933-мĕш çулхи апрелĕн 3—4-мĕшĕсенче пулса иртнĕ.

ж) Критикă идеологи тĕлĕшĕнчен те тата маçтăрлăхăн пахалăхне тишкĕрес йĕнчен те начар, ку ĕçе писатĕлсем хăйсем те сахал хутшăнса ĕçлеççĕ.

з) Писатĕлсене, пуринчен ытла çамрăк писатĕлсемпе литкружоксене йертсе пырас ĕç çителĕксĕр, Оргкомитетпа издатĕлствăсем тата редакцисем вĕсем патне килнĕ пур произведенисем тăрăх та консулЬтацисем парайм аççĕ тата парсан та, çийĕнчех мар, йулса параççĕ.

и) Литкружоксен профилĕсене паллă туман. Çакăн пирки йертсе пырас ĕç пуринчен ытла шкулсенчи литкружоксем тĕлĕшпе пулса пырать, предприйатисемпе колхозсенчи литкружоксем çителĕклĕ таран пулăшу илеймеççĕ тата вĕсен йышне ўстерес тĕлĕшпе те сахал ĕçленĕ.

Çавăнпа та çак канашлăва предприйатисемпе колхозсем çумĕнчи литературă кружокĕсенчен писатĕлсем килменпе пĕрех. Ку ĕçре пуринчен ытла Оргкомитет айăплă.

к) Октабĕр револЬуцийĕ тивлечĕпе чăваш ĕçхĕрарăмĕ ĕмĕрхи пусмăртан чăн-чăнах та ирĕке тухса, социалисăм строителствинче арçынсемпе танах хăстарлăн ĕçлеме май тупни чăваш литературинче çителĕклĕ таран вырăн тупайман, писатĕлсен ĕретĕнче те хĕрарăмсем питĕ сахал. Уйрăмăнах ку çитменлĕх çак канашлура пĕр хĕрарăм писатĕл те пулманнинчен курăнать.

Çўлте каланă çитменлĕхсене асра тытса, канашлу çак ĕçсене тума кирлĕ тесе йышăнать:

1. Пĕтĕм Сойузри Оргкомитетăн 3-мĕш пленумĕ художĕствăллă литературă пахалăхне хăпартас тĕлĕшпе лартнă задачăсене тĕпе хурса, çамрăк писатĕлсен хăйсен малашнехи ĕçĕнче çаксене асра тытса ĕçлемеле:

а) Произведенисен содержанине социалисăм строителствин конкретлă задачисемпе тата таччăнрах çыхăнтармала; анчах кăна пĕрре те хальхи ĕçсем çинчен çеç çырмала тенĕ пек ăнланмала мар, ку чăн малтан писатĕлсемпе поетсен пур ыйтусем çине те класcăр социалисăмлă обшчĕствă тăвакан пролетари куçĕпе пăхмала, хăйсен творчĕствине социалисăм тăвас ĕçе пăхăнтармала тенине пĕлтерет. Çавăнпа писатĕлсемпе поетсен пурнăçа тĕплĕн сăнаса, вĕренсе пынипе пĕрлех хăйсен тĕнче ăнланăвне тарăнлатса çирĕплетме, етем обшчĕствинчи класс кĕрешўне тата çутçанталăка марксла ăнланса çитме Маркс—Энгелс—Ленин—Сталин вĕрентĕвне вĕренсе çитме тăрăшмала.

б) Художĕствăллă литературăн тĕп уйрăмлăхĕ вăл ĕçлăхра пулнă пирки, литературă художĕствăлăхне хăпартасшăн тăрăшмала, литературă художĕствăлăхне чакаракан публицистикăпа, риторикăпа, схематисăмпа тата политикăлă лозунгсене сăвă çине куçарса çăмăлттайла кăшкăрни семпе пĕтĕм вăйа хурса кĕрешмеле;

в) Формăна хăпартмала, социалисăм тапхăрне тивĕçлĕ литературă формишĕн тăрăшмала. Нацилĕ формăна хăш-пĕр йулташсем националисăмла ăнланнине шута илсе, нацилĕ формă ыйтăвĕсене тĕпчес тĕлĕшпе писателсемпе поетсем хушшинче тĕплĕн çуто-йавни кирлĕ, уйрăмăнах вырăс литературинче М. Горький писатĕл пуçарнипе чĕлхе çинчен тапратнă ыйтăва чăваш литературинче те пĕтĕм аслăшпех лартса, ăна „Правдă“ хаçат кăтартса панă пек пурнăçа кĕртсе пымала.

г) Произведенисен тематикине сармала, çав хушăрах кайа йулса пыракан темăсемпе жанрсене хăпартма тăрăшмала, кувта уйрăмăнах сыхлăх литературине, кулăшла тата сатирăла жанрсене тивĕçлĕн вăйлатса йамала.

д) Пирĕн писатĕлсем ача-пăча литературине тăвас ĕçре ытла та кайа йулнине пĕтерме шкĕн Оргкомитетпа Çутĕç комиссариачĕн тата Чăвашгизăн йатарласа меслетсем тупмала.

Писатĕлсемпе композитăрсене, педагогсене тата ача-пăча ĕçне çывăх çынсене çак ĕçре пикенсе ĕçлемешкĕн чĕнсе, çитесси кĕркуннеччен ача-пăча литературин конкурсне туса иртермеле.

3) Çамрăк писатĕлсене йертсе пырас ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе канашлу Оргкомитета çак ĕçсене тума сĕнет:

а) Стеңки йулташ хăйĕн мартăн 8-мĕшĕнче тупă докладĕнче консультаци ĕçĕ çинчен каланине пĕтĕмĕшпе пурнăçа кĕртмеле. Çак тĕлĕшпе Оргкомитет çумĕнчи консультацийе вăйлатмала, ку ĕçе пур паллă писателсене те хутшăнтармала.

б) Пур издательствăсем çумĕнче те (Чăвашиздатра, республикăри тата районсенчи хаçат редакцисем çумĕнче), çавăн пекех тата Радиокомитет çумĕнче те литконсультацисем организацилемеле.

в) Паларнă çамрăк писателсене шеф йĕркипе паллă писателсем çумне çирĕплетмеле.

г) Çамрăк писателсен произведенийĕсем тăрăх рецензисем, критикăллă статйасем тата ытти урăх май ă кăтартусем парас ĕçе вăйлатмала, вĕсен творчĕствине тăтăшăнах пăхса тухас ĕçе организацилемеле;

д) Октябĕр революцин 15-мĕш йубилейĕ ячĕпе иртнĕ конкурса çамрăк писателсем çителĕклĕн хутшăнайманни пысăк çитменлĕх пулнине шута илсе, Чăваш автономи 15 çул тултарнă йатпа пулас конкурса вĕсене аслăн хутшăнтарма тăрăшмалла.

е) Çамрăк писателсен произведенисене уйрăм кĕнекепе кăларас ĕçе вăйлатмала, тухнисене вăхăтра сӳтсе-йавмала.

ж) Творчĕстиăллă ыйтусем тăрăх тĕрлĕ канашлусем туса иртерни çамрăк писателсене пысăк пулăшу панине асра тытса, Оргкомитетăн малашне уйрăм ыйтусем тăрăх канашлусем туса иртермеле.

4. Литкружоксене йертсе пырас ĕçе вăйлатмала. Ку тĕлĕшпе çаксене тумала:

а) Оргкомитетăн Çутĕç комиссариачĕпе шкулсенчи литкружоксене йертсе пырас тĕлĕшпе, Профсоветпа—предприйатисенчи литкружоксене йертсе пырас тĕлĕшпе калаçса татăлмала, литкружоксене йертсе пырас ĕçре Оргкомитетпа çав учрежденисен мĕн-мĕн тумалисене паллăн уйăрса хумала.

б) Литкружоксене вĕренӳ программисем вăхăтра памала, кунсăр пуçне вĕсене, хăйсем вĕренӳри тата творчĕствăри уйрăмлăхĕсене кура, конкретлăн йертсе пымала.

в) Оргкомитетăн литкружоксемпе чĕрĕ çыхăну тытмала. Ку тĕлĕшпе вĕсем патне инструктăрсене тата паллă писателсене йарса, чĕрĕ кăтартусем памала, канашлусем тата смотрсем туса иртермеле.

г) Районсенчи литкружоксене йертсе пырас ĕçе литкружоксене çывăхрах куçарас шутпа кашни райхаçат редакцийĕ çумĕнче районри çамрăк писателсен активĕнчен примерлă кружок организацилемеле.

д) Районри литкружоксене йертсе пырас тĕлĕшпе райхаçат редакцисем çине пысăкрах ĕç, пысăкрах ответ хумала.

5. Çамрăк писателсен комсомолăн Чăваш Обкомĕ республикăра колхоз çамрăксен творчĕствине пăхса тухас тĕлĕшпе организациленĕ ĕçне тата умра тăракан большевикла çуракиве иртерес ĕçе вăйлăн хутшăнмала, вĕсен ку ĕçсече организатăрсем пулса ĕçлемеле. Районсенче тата республикăра пулмали колхоз акатуйĕнче писателсем çуракинче тунă ĕçсене тĕпчесе тухмала.

6. Парти иккĕмĕш пилĕкçуллăха лартнă задачă—економикăран та, çынсен ăстанĕнчен те капитализм йулашкисене кăкласа пĕтересси, çынсене социализм строительствишĕн активлăн кĕрешекенсем тăвасси, классăр социалисăмлă обшчĕства тăвасси—писателсемпе поетсене чи çывăххăн тивекен задачăсем пулса тăраççĕ, вĕсене хăйсен пултарулăхне темиçе хут ӳстерме хушаççĕ.

Çавна асра тытса çамрăк писателсен канашлăвĕ пур писателсемпе поетсене тата критиксене хăйсен клас сисĕмлĕхне çивĕчлетсе, хăйсем хушшинчи самокритикăна хастаррăн хăпартса пырса, чăвашсен совет литературин çулĕ çинче чăрмавлакан тĕрлĕ шухăшсене хирĕç пĕр хĕрхевсĕр кĕрешсе пырса, содержани йенчен те формă тĕлĕшĕнчен те Сталин тапхăрне тивĕçлĕ социалисăмлă литературă тăвасшăн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеме чĕнет.